Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУЛĔН 22 ЕРНЕКУН 167 (4980) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—57
Ред. заместителĕн 0—85
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйĕн 6—23

Уйхир ĕçĕнче малтан палăрнă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерер

Республикăн пур районĕсенче те кĕрхи тырăсене пухса кĕртес ĕç хĕрӳлĕн пырать. Кăнтăр йенчи районсенче вырса та пĕтереççĕ. Чылай колхозсенче колхозниксем малтанхи кунсенчех пысăк организацилĕх кăтартреç. Малтанхи кунсенчех пысăк ĕç тухăçлăхĕ паракан уйхир стахановцисем палăрчĕç.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе лайăх хатĕрленсе организацилĕн ĕçе тухнипе Шăнкăртам районĕнчи „Сталь" колхоз ийулĕн 18-мĕшне—5 кун хушшинчех ыраш вырса пĕтернĕ. Кунта машиноведсем кунне 11—11,5-шар гектар вырса пынă. Патăрйел районĕнчи „Красное Знамя" колхозри Убакин йулташ бригади 4 кунра вырса пĕтернĕ. Шăмăршă районĕнчи „Трактăр" колхозра Воробйов йулташ бригади 3 кун хушшинчех вырса кĕртнĕ.

Шăнкăртам районĕнчи „Маяк" колхозри машиновед Азисăв йулташ ийулĕн 18 мĕшĕнче жнейкăпа кунне 12 гектар вырнă. Вăтам шутпа кашни кун 10 шар гектар вырать. Йелчĕк районĕнчи „Ким" колхозра Баскакăв йулташ кунне 9 шар гектар, Патăрйел районĕнчи „Красный партизан" колхозри машиновед 10-шар гектар вырать. „Первомайск" колхозра машиновед Леонтйĕв йулташ малтанхи куннех 10 гектар, иккĕмĕш кунне 12 гектар вырнă.

Кĕлте çыхакансенчен те стахановла ĕçлекенсем, ĕç нормине 2—3 хут ытла тултарса пыракансем нумай. Ку ĕçре чи малтанах колхозницăсем малта пыраççĕ. Патăрйел районĕнчи „Красное знамя" колхозра Бакашкин йулташ ийулĕн 16-мĕшĕнче кунне 1200 кĕлте çыхнă. Йелчĕк районĕнче Ап-Темăшри колхозра Иванова йулташ 1115 кĕлте çыхнă. Шăнкăртам районĕнчи „Маяк" колхозра кĕлте çыхакансем Сафиуллин, Абайдуллина тата Сабирсанова пĕрлешсе—иккĕшĕ кĕлте çыххи туса пырса, пĕри çыхса пырса—кунне пурĕ 4900 кĕлте çыхнă. Ку вăл—çын пуçне 1630 кĕлте туни—чăнах савăнмалла, колхозла ĕç çеç пама пултаракан пысăк рекорд. Вăл колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес кăмăлне, вĕсен пултарулăхĕпе пуçарулăхне кăтартса парать.

Стахановла ĕçлени тата пысăк рекордсем пани, паллах, тырпулсене кĕске срукра тата лайăх пахалăхпа пухса кĕртме май парать. Анчах та, стахановла ĕçлесси вăл хăй тĕллĕн пулмасть. Ăна организацилес пулать. Çавăн çинчен, ĕçе большевикла организацилеме кирли çинчен маннă вырăнсенче нимĕнле стахановла ĕçлесси те пулаймасть. Çавна кашни колхоз руководителĕн, партипе совет организацийĕсен пĕр минутлăха та манмалла мар.

Вырма тухнă колхозсем пысăк организацилĕх кăтартнипе пĕрлех, малтанхи кунсенче чылай колхозсенче пысăк çитменлĕхсем пулнине те кăтартреç. Йĕпреç районĕнче „Çĕнтерӳ" колхозра жнейкăна малтанхи кунах кăнтăрлаччен ĕçлесен ватса пĕтерни, Турхан районĕнче „Совет" колхозра 4 кун хушши алăпа вырсан тин жнейкăпа уйа тухни, вырăнĕн-вырăнĕн кăçал та машинăпа вырассине хирĕçле шухăшсем пуррине пĕлтерет. Патăрйел районĕнче „Красный партизан" колхоз председателĕ уççăнах машинăна хирĕç пулнă. Çавăн пек сийенлĕ шухăшсене сийĕнчех пĕтерсе пырса машинăсемпе туллин усă курмалла.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „1938 çулхи тырпула пухса кĕртесси çинчен" йышăннă постановленин çинче машинăпа вырнă тырра пĕтĕмпех кĕлтене çыхса памалла тесе уйрăмăнах асăрхаттарать. Постановленин çав пунктне пурнăçа кĕртсе пымăн колхозсем те пур-ха. Патăрйел районĕнчи „Путь Ленина" колхозра машинăпа вырнă тырă çыхмасăрах выртать. Колхозниксем ирхине 4 сехетре тухас вырăнне 7 сехетре тин уйа тухаççĕ. Пăрачкав районĕнчи „Новый путь" тата Калинин йачĕпе тăракан колхозсенче те вырнă тырра çыхмасăр выртараççĕ.

Тырпулсене пухса кĕрес ĕçе тухиччен тырă ампарĕсене, авăнсемпе витнĕ итемсене тата машинăсемпе ытти ĕçхатĕрсене пĕтĕмпех йусаса çитерсе дезинфекцилесе хумалла пулнă пулсан, çав ĕçсем те чылай çĕрте кайа йулнă. Çĕрĕç органĕсемпе колхоз руководителĕсем клещсемпе кĕрешсе государствăна вăхăтра тата та са тырă парса татни хисеплĕ задачă пулса тăнине манмала мар.

„Тырпулсене пухса кĕме тытăннă хыççăн 3—5 кунтан ытла кайа йулмасăр, чи малтанах уйри çĕмелсене авăн çапма тытăнмала", чи малтанхи тырра государствăна парса татмала. Правительствă çапла кăтартса пани халь пур çĕрте те пурнăçа кĕрсе пымасть. Чылай колхозсенче пайан-ырансенче ыраш вырса пĕтереççĕ, анчах çĕнĕ тырра çапма тытăнни пачах сахал. Ку вăл уйрăмăнах кăнтăр йенчи районсемшĕн хăрушлăх пулса тăрать. Иртнĕ çулхи урок—хăшпĕр колхозсенче авăн çапас ĕç çуркуннеччен тăсăлни—çав районсенчи партипе совет организацийĕсен тата колхоз руководителĕсемшĕн ниме те пĕлтермест пулас. Авăн çапас ĕçе партипе правительствă хушнă пек организацилемеле, государствă умĕнчи обйазательствăна хăвăрт пурнăçа кĕртмеле.

Республикипе пурĕ кăçал 230 комбайн ĕçлемеле. Комбайн пуçне 300 гектартан кайа мар ĕçлеме хушать вĕçĕ республика хушшинче тунă социалисăмлă ăмăрту договăрĕ. Калас пулать, комбайнсем кăçал чылай çĕрте кайарах йулса ĕçе тухреç. Халь вĕсене пĕтĕм пултарулăхĕ таран ĕçлеттермеле.

Политикăлă, культурлă-массăлă ĕçе аван йĕркелене çерте производствăлă ĕç те аван пырать. Чылай колхозсенче малтанхи кунсенче çав ĕçсене çителĕксĕр туса пынă. Каннă вăхăтра хаçатсем вуласа панине хăшпĕрисем политикăлă-массăлă ĕç тесе шутласа политикăлă агитаци çинчен пачах маннă пулнă. Хаçатсем вуласа пани кирлĕ ĕç, анчах вăл çеç çителĕксĕр. Тырпулсене пухса кĕрес ĕç вăхăтĕнче политикăлă агитаци ĕçĕ вăйсăрланнине, вырăнсенчи парти организацийĕсем вăл ĕç çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхнине çак тĕслĕх аван кăтартса парать: Канашри машинă-трактăрлă станцинче çураки ĕçĕ вăхăтĕнче кашни трактăр бригадинче агитатăрсем ĕçленĕ. Тырпулсене пухса кĕрес ĕç вăхăтĕнче—комбайн аггрегачĕсем çумĕнче агитатăрсен ĕçĕ татах вăйлăрах пулмала,—кунта кашни аггрегатра йалан 20 çынна йахăн ĕçлет, анчах çураки вăхăтĕнче ĕçленĕ агитатăрсем халь пачах çухалса пĕтнĕ. Партилĕ-политикăлă ĕç планĕ çинчен МТС çумĕнчи пуçламĕш парти организацийĕнче те, парти райкомĕнче те халиччен сӳтсе-йавман.

Сахал мар колхозсенче халь те ĕç планĕсене туса çитермен, ĕç нормисене çĕнĕрен пăхса тухса колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче сӳтсе-йавман. Йĕпреç районĕнчи „Нива" колхозри пек икĕ жнейкă умлă-хыçлă пырса пĕр участокă çинче ĕçлемеле тунине нийепле те ĕçе тĕрĕс организациленĕ теме çук. Ĕç нормисем те кунта килĕшӳлĕ мар. Машинăпа вырнă тырра çыхма та, алăпа вырма та нормă пĕр пек—кунне 200 кĕлте.

Палăртнă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермеле. Чылай районсен руководителĕсем малтанхи вăхăтри çитменлĕхсенчен хăйсене валли тивĕçлĕ вывăд тума пултараççĕ. Малта пыракан колхозсен тата стахановĕцсен опычĕсене кашни колхоза çитермеле, социалисăмлă ăмăртăва татах вăйлатмала. Çапла тусан çеç тырпулсене пухса кĕртес ĕçе лайăхрах организацилеме пулать. Кăнтăр йенчи районсенче те ĕç ыраш вырса пĕтернипех пĕтмест. Халиччен пулнă çитменлĕхсене вĕсен татах хăвăртрах пĕтермеле. Оперативлăха ниçтан хинчен ытла вăйлатмала, ответлăха ӳссĕн туймала. Çавна ыйтать вырăнсенчи парти тата совет организацийĕсен руководителĕсенчен пайан кунхи задачă.



РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессинче

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: РСФСР Верховнăй Совечĕн председателĕ А. А. Жданăв, председатĕл заместителĕсем А. Х. Тынчерăв (сылтăмра) тата П. С. Макарăвă.

С. Лоскутовпа Ф. Кислов фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото)

РСФС Республикĕн 1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çеççийĕ

РСФС Республикĕн 1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн 1-мĕш Çеççин 1938 çулхи ийулĕн 20-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен

ИНФОРМАЦИЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Ийулĕн 20-мĕшĕнче, РСФСР Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем пулакан залра, Кремльре, РСФС Республикĕн 1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çеççин пиллĕкмĕш, йулашки ларăвĕ пулнă.

Ларăва председатĕл пулса йертсе пыраканĕ—РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ депутат А. А. ЖДАНĂВ.

Верховнăй Совет РСФСР Халăх Комиссарĕсен Советне туса хурасси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухма тытăнать.

Депутат Н. А. БУЛГАНИН РСФСР Халăх Комиссаресен Совечĕн составне пăхса тухма Верховнăй Совета тăратать.

БУЛГАНИН йулташ хăйĕн сăмахĕнче, иртнĕ ларура РСФСР Правительствине туса хурас ыйту тăрăх пренисенче депутатсем асăрхаттарнисем пирки, вĕсен ыйтăвĕсем пирки ответ парать.

Уйрăмăн сасăласа Верховнăй Совет РСФСР Правительствин—РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн çакăн пек составне туса хурать:

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ—
НИКОЛАЙ АЛЕКСАНДРĂВИЧ БУЛГАНИН.

РСФСР Халăх Комиссаресен Совечĕн Председатĕл Заместителĕ—
Иван Григорйĕвич Кабанов.

Государствăн План Комиссин Председателĕ—
Йакăв Йермолайĕвич Чадайĕв.

Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссарĕ—
Павел Васильйĕвич Смирнов.

Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссарĕ—
Сергей Георгийĕвич Лукин.

Вăрман промышленнăç Халăх Комиссарĕ—
Трофим Павлăвич Кудрйашов.

Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ—
Павел Павлăвич Лобанăв.

Тĕштырăпа выльăх-чĕрлĕх Совхозĕсен Халăх Комиссарĕ—
Алексей Дмитрийĕвич Ступăв.

Финанс Халăх Комиссарĕ—
Василий Федăрăвич Попов.

Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ—
Александр Васильйĕвич Любимăв.

Йустици Халăх Комиссарĕ—
Йакăв Петрович Дмитрийĕв.

Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ—
Иван Иванăвич Белоусăв.

Çутĕç Халăх Комиссарĕ—
Петр Андрейĕвич Туркин.

Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссарĕ—
Василий Васильйĕвич Вахрушĕв.

Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссарĕ—
Константин Дмитрийĕвич Памфилăв.

Социаллă обеспечени Халăх Комиссарĕ—
Марийă Александрăвна Шабурăвă.

Искусствă ĕçĕсен Управлени Начальникĕ—
Николай Николайĕвич Беспалăв.

Сулйĕр Управлени Начальникĕ—
Всеволод Тихăнăвич Федăрăв.

Верховнăй Совет ларăвне рабочисен, работницăсен, колхозниксен, колхозницăсен, интеллигенципе служăщчисен, çавăн пекех тата Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флочĕн делегацийĕсем пыраççĕ.

Мускав хулинчен тата Мускав облăçĕнчен пынă делегацирен Авиахим йачĕпе тăракан №1 савăтри рабочи стахановĕц А. А. Фролăв йулташ тухса калаçать; Ленинград хули делегацинчен—Кирăвски савăтри рабочи-стахановĕц С. Г. Карташов йулташ; Тутар АССР делегацинчен—Хусанти йĕтĕн комбинатĕнчи мастăр А. С. Калиулина йулташ; Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флочĕн делегацинчен—кĕçĕн командир артиллерист Ф. В. Кузнецов йулташ тата кĕçĕн командир подводник П. С. Кобликăв йулташ тухса калаççĕ.

Çессин кун йĕркинчи ыйтусене пăхса тухса пĕтернĕ. РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ А. А. Жданăв йулташ кун йĕркинчи пур ыйтусем тăрăх та Верховнăй Совет пĕр сасăпа решенисем йышăнни çинчен пĕлтерет тата РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессине хупăннă, тесе пĕлтерет.

Совет пилочĕсен пĕтĕм тĕнчери авиаци рекорчĕсем

ССР Сойузĕн Косарĕв йачĕпе тăракан Тĕп вероклубĕ Пĕтĕм тĕнчери Авиаци Федерацин (ФАИ) президиумĕнчен пĕлтерӳ илнĕ. Вăл пĕлтерӳре: çар летчицисем орденоносецсем П. Осипенко, В. Ломако тата М. Раскова вĕçевĕ—çавракă линипе инçене вĕçнин пĕтĕм тĕнчери хĕрарăм рекорчĕ пулать тесе çирĕплетни çинчен пĕлтернĕ.

Ку рекорда хăйулă совет хĕрарăмĕсем Çевастопольрен Архангельска инçе вĕçме хатĕрленнĕ тапхăрта тунă. Вĕсем хайсен „МП-1" гидросамолочĕ çинче Çевастополь—Евпатори — Очакăв—Çевастополь маршрутпа 9 сехет те 32 минут хушшинче пĕр лармасăр 1.749 километр та 213 метр вĕçнĕ.

Пилот-паритĕл О. Клепикăвă 152 километр та 638 метр вĕçнине ФАИ: „Д" класпа инçене вĕçсе тунă пĕтĕм тĕнчери хĕрарăм рекорчĕ пулать, тесе çирĕплетнĕ.

Нумай çын ларса вĕçмели планерсен категорийĕ тăрăх—Совет планерисăмĕн мастăрĕ Карташов йулташ вĕçнин результатне (вăл 191 километрта 348 метр вĕçнĕ), пĕр çын ларса вĕçмели планерсен категорийĕ тăрăх—совет планерисăмĕн мастăрĕ Коротов йулташ вĕçнин результатне (вăл 191 километрта 348 метр вĕçнĕ) инçене вĕçсе çĕкленнĕ вырăна кайала вĕçсе таврăнса тунă пĕтĕм тĕнчери рекордсем пулаççĕ, тесе çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем М. И. Калинин йачĕпе тăракан „Фрезер" савăтра

Ийулĕн 20-мĕшĕнче Мускаври М. И. Калинин йачĕпе тăракан „Фрезер" савăта РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем В. К. Кириллăв, П. А. Карпăв, И. А. Вазанăв, Е. В. Каменкова, С. В. Копов тата К. И. Шикина йулташсем пырса курнă.

Хăнасем савăт ĕçĕпе паллашнă, цехсенче пулнă, рабочисемпе калаçнă. Депутатсене термический цех питĕ интереслентернĕ.

Депутат Каменкова—шкул преподавателĕ—çапла калать:

— Савăтран манăн асрах кайми картинăсем йулчĕç. Епĕ ачасене стахановĕцсен чаплă ĕçĕсем çинчен, савăт лабораторийĕсем çинчен каласа парăп.

(ТАСС).

РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессин материалĕсене вĕренеççĕ

Новосибирскри предприйатисенче рабочисем РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессин материалĕсене пысăк çĕкленӳпе вĕренеççĕ. Цемент тăвакан „Пролетарий" савăтăн цехĕсенче 85 агитатăр, вуласа паракансем, калаçу иртерекенсем ĕçлеççĕ. Çменăсем ĕç пĕтернĕ хыççăн тата кăнтăрлахи апат перерывĕсенче вĕсем рабочисене хаçатсем вуласа параççĕ, вĕсене Çесси РСФСР Конституцине кĕртнĕ улшăнусемпе паллаштараççĕ. Килхуçи хĕрарăм-агитатăрсен ушкăнĕ Çесси материалĕсене килхуçи хĕрарăмсем хушшинче вĕрентет.

(ТАСС).

Комбайнерсен çитĕнĕвĕсем

Краснодар крайĕнчи, Штейгарт районĕнчи комбайнерсем тырпула пухса пĕтермелли стахановла вунăкунлăха активлăн хутшăннă. Вăл вунăкунлăха РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессине чыслаласа ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕсем Борин тата Ковардак пуçарса йанă.

Ийулĕн 17-мĕшĕнче комбайнсемпе 1.830 гектар вырса пуçтарнă. Ку вăл вăтам шутпа кашни комбайнпа 23-шер гектар пуçтарнине пĕлтерет.

Малти ретре Костенко тата Афанасйĕв пыраççĕ. Костенко икĕ ерне хушшинче икĕ „Сталинĕц"па ĕçлесе 1 077 гектар вырса пуçтарнă, 12.457 центнер тырă çапса кăларнă. Борин аггрегатĕнче ĕçлекен Афанасйĕв вăтам шутпа кунсеренех 80-шар гектар таран вырса пуçтарать.

Районри комбайнерсем тырпула çывăхри 3—4 кун хушшинче вырса пухса пĕтересси шĕн ăмăртаççĕ. Пучахлă тырăсен 75 процентне пухса пĕтернĕ те йентĕ.

(ТАСС).

Сталинла маршрутпа

(Чкалăв, Байдуков тата Беляков йулташсем чаплă вĕçев туни икĕ çул тултарнă тĕле)

1936 çулта советăн хĕрлĕ çунатлă самолочĕ—самолётсем тăвакан совет савăчĕсен мухтавĕ—Сталин йулташран Мускавран Камчатка çинчи Петропавловска вĕçсе кайма задани илчĕ. Самолот екипажĕнче висĕ çын пулнă: пĕрремĕш летчик В. П. Чкалăв, иккĕмĕш летчик Г. Ф. Байдуков, штурмăн А. В. Беляков.

Ийулĕн 20-мĕшĕнче самолот Мускавран ниçта анса лармасăр инçетри вĕçеве тухнă та, 17 сехет хыççăн Совет Сойузĕн çурçĕртинчи инçетри утравне—Франц-Иосиф Çĕрĕ çине çитнĕ. Кунта чăн-чăн хĕл тăнă, утравсем пăрпа тата йурпа витĕннĕ, утравсенчен çурçĕреле—пăрлă пушхирсем выртнă. Епĕр Франц-Иосиф Çĕрĕ çинче хĕл каçакансемпе радио тăрăх пĕр-пĕрне саламларăмăр та Çурçĕр Çĕрĕ çине çул тытрăмăр.

Ийулĕн 21-мĕшĕнче ирхине, поларти циклонпа хайаррăн кĕрешнĕ хыççăн, епĕр хамăр айра Çурçĕр Çĕрĕн пăрлă тӳписене куртăмăр. Унтан, епĕр материк çине тухрăмăр та сăртлă Йакут çĕршывĕ урла вĕçсе каçрăмăр. Хĕвел пĕр сăхетлĕхе те аймарĕ. Ийулĕн 22-мĕшĕнче Гринвич вăхăчĕпе 3 сехетре хамăр çитме палăртса хунă пункта — Камчатка çинчи Петропавловск хулине çитрĕмĕр. Чылай вăхăт хушши 4—5 километр сӳлĕшĕнче вĕçрĕмĕр.

Ийулĕн 22-мĕшĕнче каçхине Инçет-Хĕвелтухăç сыранĕсене çитрĕмĕр. Кантăртан килекен хăватлă циклон пирĕн çула картласа лартрĕ, вара Чкалăв самолота Удд йатлă пĕчĕк утрав çине—халь Чкалăв йатлă утрав çине—антарса лартрĕ. Самолот 56 сехет те 20 минут хушшинче ниçта анса лармасăр 9.374 километр вĕçрĕ.

Совет Сойузĕн Геройĕ
А. Беляков.

Икĕ çын лармали планерпа 640 километр вĕçнĕ

Ийулĕн 17-мĕшĕнче Мускав аеродромĕ çинчен икĕ çын лармали „Стахановец" планер çине пĕр пассажир лартса, планера самолет çумне кăкарса, совет планерисăмĕн мастăрĕ Карташов вĕçсе çĕкленнĕ.

Карташов йулташ Черниговран 55 километрта Ушца йалĕ çывăхĕнче ăнăçлăнах анса ларнă.

Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, Карташов йулташ пĕр лармасăр 640 километра йахăн вĕçнĕ. Çак вĕçевпе вăл совет планерисăмĕн мастăрĕ Илченко йулташ, инçене вĕçсе тунă пĕтĕм тĕнчери рекорда кайа тăратса хăварнă, Илченко майăн 15-мĕшĕнче пĕр лармасăр 552 километр та 100 метр вĕçнĕ.

(ТАСС).

Пурте ăмăртăва хутшăннă

КАНАШ, ийулĕн 21-мĕш. (Телефон тăрăх, хамăр корр.). Чукунçул станцинчи дежурнăйĕсемпе стрелочниксем пĕтĕм Сойузри чукунçул транспортĕнче ĕçлекенсен кунне хатĕрленес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме пуçларĕç. Пайанхи куна станцăра ĕçлекенсем пурте социалисăмлă ăмăртăва хутшăннă. Станцă Арзамас станципе ăмăртăва тухнă.

Кашни рабочи чукунçул транспортĕнче ĕçлекенсен кунне çĕнĕ çĕнтерӳсем тунине кĕтсе илесси шĕн кĕрешет. Хайсем çине илнĕ обйазательствăра вĕсем уйрăмăнах аварипе простой пулассине пĕтерме, çулсене таса тытма, пойăссене йĕркеллĕ çӳретме пулаççĕ. Акă стрелочниксем Федотăвпа Степанăв йулташсем ийулĕн 30-мĕшчен аслă стрелочник йатне илмç екзамена отличнă тытма, Фролов йулташ дежурнăй пулма тата Ананйĕв, Иванов йулташсем пойăссене йĕркелессипе нормăна 120 процентран кайа мар тултарса ĕçлеме обйазательство илчĕç.

Станцăра ĕçлекенсем килçуртсене, вокзала тата станцă тавра шĕсене тасатас, йĕркене кĕртес тĕлĕшпе ĕçе пуçарса йанă.

М. Титов.

Совет Сойузĕ тăрăх

● Ийулĕн 18-мĕшĕнче Ворошилăв хулинче хĕрлĕ йалавлă Инçет-Хĕвелтухăç флочĕн 4-мĕш спартакиади уçăлнă. Спартакиадă ийулĕн 21-мĕшчен пырать.

● Тырпулсене вырса пуçтарнă вăхăтра Ивановă облăçĕн хирĕсенче 220 кинопередвижкă ĕçлемеле.

(ТАСС)

Комбайнсене пĕр сехет те ĕççĕр тăратмала мар

„Тырпулсене пуçтарса кĕртесси—çезонлă ĕç, тăхтаса тăнине йуратмаст вăл. Вăхăтра пуçтаратăн—илетĕн, ĕçре кайа йулатăн—çухататăн" И. СТАЛИН.

Кăнтăрти районсенче

ЙЕЛЧĔК. Районри колхозсен кăçал 10.954 гектар çинчен ыраш пуçтарса кĕмеле. Ийулĕн 20-мĕшне пурĕ 5.748 гектар вырнă. Сталин, Тимирйазĕв, Дзержинский йачĕпе тăракан тата „Осоавиахим", „Ким", „Красный партизан", „Звезда", „Ново-Чурино" колхозсем ыраш вырса пĕтернĕ. Хальҫак колхозсенче государствăна тырă пама авăн çапма тытăннă.

Нумай колхозсенче ыраша ырансенче вырса пĕтереççĕ. Комбайнсем валли уйăрса хăварнă участкăсем çеç йулаççĕ. Кунта çакна палăртса хăвармала: МТС-ри малтан кадрсем пирки тĕплĕн шухăшласа пăхман пирки, чылай комбайнерсем комбайн техникине пĕлмеççĕ. Çакăн пирки ĕçре пысăк чăрмав пулса тăчĕ. Ийулĕн 20-мĕшне çитсе те хăшпĕр комбайнсем ĕçлеме тытăнман. Комбайнер Богданăв комбайнпа кунне 15 гектар пуçтарать. Тӳрех калас пулать, комбайнсемпе ĕçлесси кайа йулса пырать. Хăшпĕр колхозсенче комбайнсене кĕтсе илеймесĕр, комбайнсем валли уйăрнă участкăсене жнейкăсемпе вырма тытăнчĕç. Йелчĕкри МТС-ин комбайнсемпе ĕçлессине лайăхлатни кирлĕ. Малтан палăртса хунă маршрута тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пымала.

Колхозсен уйхирĕсенче социалисăмлă ăмăрту тивĕçлипе сарăлса пырать. Кашни колхоз тырпула тăкаксăр тата кĕске срукра пуçтарса кĕме тăрăшать. Çакна та кăтартса хăварас пулать: колхозсенче кăçал иртнĕ çулхипе танлаштарсан, жнейкăсемпе туллин усă курни палăрать. Жнейкăсемпе вырас нормăсене ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Акă, „Комбайн" колхозра В. Шчипцов колхозник кулленех 12 гектар вырать. „Звезда" колхозра А. Волкăвă кунне 1020 кĕлте, Поликарпăвă—983 кĕлте çыхса пыраççĕ. Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозра Иголкинă колхозницă кашни кун 1200-шер кĕлте çыхса пырать.

Йелчĕк районĕнчи колхозсем ыраша ийулĕн 25-мĕшне вырса пĕтерессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

Шăнкăртам, ийулĕн 21-мĕш. (Телефон тăрăх). Районĕпе 3.261 гектар ыраш вырнă, йе вăл мĕн пур ыраш лаптăкĕнчен 70,3 процент пулать. Ийулĕн 20-мĕшне районра 7 колхозра: „Осоавиахим", „Кзыл Тан", „Сталь", „Майак", „Мотор", Нариман йачĕпе тăракан, „Кзыл Сабанчи" колхозсем ыраш вырса пĕтернĕ.

„Майак" колхозникĕсем уйхирте ăмăртса ĕçлереç. Колхозниксемпе колхозницăсем Сафиуллин меслечĕпе ĕçленипе 1200—1300 кĕлте çыхакансем йышланса пычĕç. Çак колхозри виççĕмĕш бригадăри Азисăв жнейкăпа 11—12 гектар вырса пычĕ. Ийулĕн 18-мĕшĕнче вăл 13 гектар вырнă.

Пайан районра ыраш вырса пĕтермен колхозсем сахал йулаççĕ.

М. Митрофанăв.

Патăрйел, ийулĕн 20-мĕш. (Телефонпа). Ийулĕн 19-мĕшне районри колхозсем 4.192 гектар ыраш вырса плана 46,4 процент тултарнă. „РОКК", „Çăлтăр" колхозсем ыраш вырса пĕтернĕ. „Хĕрлĕ Октябĕр" тата „Первомайск" колхозсем ыраша йулашки кун выраççĕ.

Колхозсенче стаханăвĕцсен йышĕ ӳссех пырать. „Хунав" колхозра Абуçĕв жнейкăпа 10—12 гектар вырать. Красин йачĕпе тăракан колхозри Андрейĕв машиновед та çавнашкалах вырать.

49 колхозран 40 колхозра, 172 бригадăран 160 бригадăра тырпулсене кăтартулăн пухса кĕрес тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Патăрйел МТС-ĕ вăйлă тырпула пухса кĕме тĕплĕн хатĕрленмен. Пурĕ 15 комбайн ĕçлемеле. Анчах вĕсенчен пĕри те йĕркелĕн çине тăрса ĕçлеме тытăнман. Комбайнсемпе мĕн пурĕ те 229 гектар çеç пуçтарнă. 7-мĕш номĕрлĕ комбайн 3 кун хушшинче те 10 гектара йахăн çеç вырнă. Малтан комбайнсемпе тырă пулса çитмен, тесе ĕçлемесĕр тăнă. Халь ĕнтĕ тырăсем пулса çитнĕ—комбайнсем çавах ĕçлеймеççĕ. Хăшпĕр комбайнсен пайĕсем çĕмĕрĕлнĕ.

Комбайнсемпе ĕçлеме участкăсене малтан палăртса хуманни чылай чăрмантарать. Тăрăнти Роза Лӳксембург йачĕпе тăракан колхозра комбайнпа ĕçлеме палăртнă участкăри ыраша жнейкăпа вырнă.

М. М.

ШĂМĂРШĂ, ийулĕн 21-мĕш. (Телефонпа). Районĕпе ыраш 4303 гектар шутланать. Вăл шутран пайан куна 2 пин гектар вырнă. „Искра", „Заря", „Побела" тата Максим Горький йачĕпе тăракан колхозсем ыраш вырса пĕтерчĕç, „Трактăр" колхоз пайан вырса пĕтерет.

Тырă вырмали машинăсем пурте ĕçлеççĕ. Хăшпĕр колхозсем пайан авăн çапма тытăнаççĕ. „Заря" колхоз пăрçа çулса кĕртрĕ. Çурхи тырăсем те тепĕр 4—5 кунтан вырмала пулса çитеççĕ.

М. Çидăрăв.

Çĕнĕ тырă пама тытăнчĕç

Шăнкăртам районĕнчи колхозсем ЧАССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессиве пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Ыраш вырса пĕтернĕ колхозсем авăн çапма, государствăна çĕнĕ тырă пама пуçăнчĕç. „Алка" колхоз 80 центнĕр, „Сталь" колхоз 67 центнĕр ыраш государствăна леçсе пачĕç. Халь „Кзыл Тан", „Кзыл Йул", „Осоавиахим" колхозсенче авăн çапаççĕ.

Митрофанăв.

Агитатăрсем—хирте

ЙЕЛЧĔК. Халĕ йалсенче çынсене сахал тĕл пулатăн. Пĕтĕм вăйпитти колхозниксем уйра ĕçлеççĕ. Пĕр çул хушши тăрăшса ĕçленипе ăнса пулнă тырпула пухса кĕрес ĕç пырать.

— Колхозниксем хамăр çĕршывра пулса иртекен çĕнĕ ĕçсемпе тата тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕпе питĕ интересленеççĕ. Епĕ калаçу иртернĕ чухне нумай ыйтусем параççĕ, — тет Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозри 3-мĕш бригадăри агитатăр К. Иванов йулташ.

Суйлав кампани вăхăтĕнче хăйсен пултарулăхне кăтартнă агитатăрсем халĕ колхозсен уйĕсенче ĕçлеççĕ. Патрекелĕнчи „Осоавиахим" колхозри агитатăр Филимонăв йулташ колхозниксене кашни кунах хаçатсенчи çĕнĕ хыпарсене вуласа парать.

Тайапа Ентринчи „Смычкă" колхозри комсомолĕц-агитатăрсем уйрăмăнах лайăх ĕçлеççĕ. К. Романăв ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлав кампанинче агитатăр пулса ĕçленĕ. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани вăхăтĕнче участкăри суйлав комиççи членĕ пулса ĕçленĕ. Оленовă ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Йелчĕк суйлав округĕн комиççи членĕ пулнă. Çак политикăлă пысăк ĕçре вĕсем пысăк опыт пухнă.

Тайапа Ентринче полиликăпа агитаци ĕçĕ суйлавсем хыççăн татах та хĕрӳлĕн пыма тытăннă. Колхозниксем тырпулсене пухса кĕме хатĕрленнĕ вăхăтра агитатăрсем ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „1938 çулхи тырпула пухса кĕртесси çинчен" йышăннă постановленипе тĕплĕн паллаштарнă. Колхозра пурĕ 7 агитатăр. Вĕсем паллăрах ыйтусене пĕрле пухăнса сӳтсе йаваççĕ, кайран колхозниксем хушшинче ĕçлеме тытăнаççĕ.

Ийулĕн 15-мĕшĕнче „Смычкă" колхоз тырпула массăлăн пухса кĕрес ĕçе тытăнчĕ. Романăв агитатăр çав кунах уйа тухса, ыраш выракан колхозниксене Коккинакипе Брйандинский йулташсен чаплă вĕçевĕ çинчен ăнлантарса панă. Мускав ĕççыннисем вĕсене кĕтсе илнĕ йатпа пулнă митингра тухса каланисене уйрах радиопа итленĕ. Романăв йулташ пуçарăвĕпе колхозра агит-повозкă организациленĕ. Агит-повозкă бригадăсем тăрăх çӳрет. Унта радио тата тĕрлĕрен хаçат-журналсемпе кĕнекесем пур.

Колхозниксем тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕпе интересленеççĕ. Çакна май агитатăрсем кашни кунах хаçатсем çинчен Испанипе Китайри вăрçăсем çинчен вуласа параççĕ. Колхозниксем радио тăрăх РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççи ĕçĕсене итленĕ.

Ийулĕн 18-мĕшĕнче Испанире вăрçă пуçланнăранпа 2 çул тулчĕ. Романăв йулташ ку ыйту тăрăх Димитров йулташ çырнă статйана радиопа панине итлеме май турĕ.

Суйлав кампани хыççăн агитатăрсен шучĕ çĕнĕрен хутшăнса пырать. Йевдокийă Оленовă суйлав иртнĕ хыççăн агитаци ĕçне хĕрӳлĕн хутшăннă. Халĕ вăл „Смычкă" колхозри лайăх агитатăрсенчен пĕри шутланать.

Троф. Майорăв.

Кантăр пусисене татаççĕ

Йетĕрне. Колхозсенче кантăр пуси пулса çитрĕ. Чылай колхозсем пуса татма тытăнчĕç. Сталин йачĕпе тăракан колхоз 5 гектар çинчи кантăр пусине татрĕ. Халь пусана пултарма шыва хуıма тытăнчĕç.

С. Рйабиновский.

Сталин йачĕпе тăракан 18-мĕш шахтăн (Донбасс) шахтйорĕсем ăмăртса ĕçлесе май уйăхĕнчех çурçул плане тултарнă. Вĕсем 453.900 тоннă кăмрăк кăларнă. Шахтăри стаханăвĕцсем циклпа ĕçлессин чи лайăх примерĕсене кăтартаççĕ

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Çĕркăмрăк кăларас ĕçри маçтăр, стаханăвкă, комсомолкă Лена Çибиревă (сулахайра) тата електросавăт машинисĕ Валйă Норенковă.

П. Довгаљур фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото)

Пĕтĕмпех вырăсла алфавит çине куçмала

Чăваш чĕлхи аталанса пыни алфавита çĕнетес ыйтăва кăларса тăратрĕ. Çак ыйтăва татса парасси питĕ пысăк ыйту пулнине чылай организацисем ăнланса илеймерĕç пулас. Пиçсе çитеймен, пăтранчăк проект саккун пулса тăрасси патне çитрĕ. Анчах тӳрех калас пулать, çав проектпа тата ĕçсем çапла тăнипе нийепле те килĕшме çук.

Пире проекта çыракансем акă мĕн калаççĕ: орфографинче хăшпĕр улшăнусем тунипе чĕлхене çăмăллататпăр, ăна вырăс чĕлхипе çывхартатпăр, чĕлхере тĕрĕс йĕрке тăватпăр, теççĕ. Вĕсем чăваш чĕлхине малала туртас вырăнне кайала йĕркесĕрлĕх, пăтранчăклăх патнеле сĕтĕреççĕ. „Йут" сăмахсемпе „хамăр" сăмахсем хушшинче Китай çтени купалаççĕ. Хăйсен ăшĕнче шутлаççĕ пулас: сире халĕ епĕр „пăтă" пĕçерсе парăпăр, анчах çисе тасатасси сирĕн çине ӳкĕ. Неуштă çак пăтăн тутине туйса илме хĕн? Паллă мар-и ĕнтĕ: йут тата хамăр сăмахсем пĕр чĕлхере пулман, пулма та тивĕçлĕ мар!

Сат вăл чăваш сăмахĕ, теççĕ... а эпохă вырăс сăмахĕ пулат иккен... Çавăнпа вĕсен хушшинче мĕнле те пулсан Китай çтени пулмала. Перне ĭ саспаллипе, теприне ть саспаллисемпе çырмала. Ыйтасчĕ проекта çыракан ăстаçăсенчен: хăш чĕлхере, хăш çĕршывра хутлă-хутлă йĕркесем пурши: пĕр правили интернационаллă сăмахсем валли, тепри—„хамăраннисем" валли? Мĕнле пуçпа шухăшласа çакна ĕçе кĕртме пулат-ши?

Совет Сойузĕнче автономлă республикăсем нумай. Вĕсенчен чылайĕшĕ ĕнтĕ кăçал вырăс алфавичĕ çине куçрĕç. Мĕншĕнни паллă: аслă вырăс халăхĕн, мĕн пур нацисене ирĕке тухма пулăшакан халăхăн культури пирĕн културăна та малала илсе пырать. Крым тутарĕсем, дагестанĕцсем (лизгинский язык), удмуртсем кăçал пĕтĕмĕшпех вырăсла алфавит çине куçрĕç. Çавăн пек тунинчен тĕрĕсрех май тупма çук, шырама та кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен, çапла туни çеç пăтранчăксенчен, пусмăр саманинчен йулнă мĕн пур „тасамарлăхсенчен" хăтарать.

Калас пулать, ку ĕçре вĕсен йăварлăхсем пирĕннинчен сахал мар, нумайрах пулнă. Сăмахран, Крым тутарĕсен тата дагестанĕцсен к сасă виçĕ тĕрлĕ илтĕнет. Вĕсем çапах та çав йăварлăхран тухма май тупнă. Акă мĕнле çыраççĕ вĕсем к сасăна: к, кх, къы. Унтан тата Крым тутарĕсен гъы саспалли пур. Дагестанĕцсен пирĕн пек илтĕнекен ă тата ĕ саспаллисем пур. Вĕсем çак саспаллисене çапла çыраççĕ: а1, е1. Пирĕн чĕлхере пур ĭ, ҥ, љ, ç саспаллисем пирки сăмах та пулма пултараймасть, вĕсене çăмăллăнах ь саспаллипе çемçетме пулать. Ă тата ĕ саспаллисене дагестанĕцсем пек аъ тата еъ тесе, йе урăхла çырма пулать, кунта калаçса татăлни кăна кирлĕ, ханăхасси малашнехи ĕç пулмала. Çапла вара, пире пĕтĕмпех вырăсла алфавит çине куçмасăр тăма сăлтав паракан пысăк чăрмавсемех çук. Тĕслĕхе пĕр ик сăмах çырса кăтартатпăр: еъссиннисем, Нямань, тяпкаъ, кайась килесь (йе кайассеъ, килессеъ,—мĕншĕн тесен еъ çемçетет), Лявук, лажа, кургa, ялда, эдем т. ыт. те. Çапла туни чăваш чĕлхинче пĕр çирĕп саккун туса хурать: мĕнле илтĕнет, çавăн пек çырмала. Ку вара вырăс чĕлхине вĕренессине те темиçе хутах çăмăллатать. Паллах вырăсларан кĕнĕ сăмахсене пĕтĕмĕшпех вырăсла çырмала пулать.

Пирĕн шутпа çакăн пек туйăнать: çурма çул çинче чарăнса тăма, чĕлхене пăтратса йама, „йут" сăмахсемпе „хамăр" сăмахсене уйăрса тăма, йулашкинчен тата ытти тăванла республикăсенчен кайа йулма пирĕн нимĕнле сăлтав та çук. Йĕплĕ сăмах вырăнне татах та йĕплĕрех сăмах хыптаракансем хыççăн кайас марччĕх!

Хăйулăн, пĕр шикленмесĕр, мĕн пур йăварлăхсене çĕмĕрсе тăкса, пĕтĕмпех вырăсла алфавит çине куçмала. „Улшăнусем" тунă йатпа витĕнсе, тĕрĕс çулран пăрса йаракансене, чăхăмласа тăракансене çул çинчен айаккала сирсе йамала.

В. Йакăвлĕв.

Ăçта пире валли шкул çурчĕ?

Çавал Çырма шкулĕ (Трак р.) 1932 çулта уçăлнă. Анчах Çавал-Çырмара шкул валли нийепле çурт та пулман пирки, шкула Выçĕлкă йалне вырнаçтарма лекнĕ. Çапла ĕнтĕ Выçĕлкăри туллимар вăтам шкул ултă çул хушши Çавал-Çырма йачĕпе пурăнать.

Малтанах шкулта вĕренӳ пĕр класра пуçланнă. Çав çулах, ачасем нумай пирки, тепĕр клас валли çурт тупмала пулнă. Унтан, ачасен йышĕ ӳссе пынă май, тата тепĕр икĕ çурт тупма тивнĕ. Çапла вырăнти укçа-тенкĕпе усă курса, шкул валли тăватă çĕрте тăватă çурт илнĕ. Анчах вĕсем пĕри те чăн-чăн шкул валли йурăхлă мар. Вĕсенче çутă та сывлăш та çителĕксĕр.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче классем çитменнипе пĕр класа колхоз клубне вырнаçтарнă. Кунта ачасене çӳреме инçе тата шкула кирлĕ условисем те çук.

Выçĕлкăра 30 кил. Пуçламĕш классене çӳреме тивĕçлĕ ачасен шучĕ çителĕклĕ пулман пирки, çамрăк ачасен Енĕшкасси шкулне çӳреме тивет. Выçĕлкăри туллимар вăтам шкулта 5—7-мĕш классем çеç. 5-мĕш класа 4 йалсоветне кĕрекен йалсенчен ултă пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнă ачасем çӳреççĕ. 1939—40 вĕренӳ çулĕнче кунта пурĕ çичĕ клас пулмала. Вара виçĕ клас валли çурт çитмест.

Çĕнĕ шкул тăвас пирки райĕçтăвком умĕнче темиçе хутчен те сăмах хускатнă. Райĕçтăвком президиумне панă ыйтусене ку таранччен те пăхса тухмаççĕ. Ку ыйтупа Çутĕç Халăх Комиссариачĕ те интересленмест.

Андрейĕв.

Майор Лин Син

Китай љотчикĕ çырнисем

I. Икĕ çапăçу

Епĕр Нанчан хули çывăхĕнчи аеродромра тăраттăмăрччĕ. Епĕр, центрти фронтра çапăçусем ăнăçлă пулччăр тесе, пĕтĕм вăй-хăвата хураттăмăр. Пирĕн тăван çĕршыв вутра çунать, Йапони захватчикĕсем хуласене çунтараççĕ,—љотчиксем çапăçăва кайасшăн çунаççĕ. Çав вăхăтра пире разведкă пĕлтерчĕ: Хаҥчжоу хулинче Йапони авиацин тĕп бази вырнаçнă. Унта, тесе каларĕç пире, икĕ моторлă йăвăр авиаци пухăнса тăнă. Хаҥчжоура истребителсем те пур. Пирĕн командовани Хаҥчжоу çине кайса тапăнас плана ырларĕ. Çак операцийе мартăн 13-мĕшĕнче тума палăртрĕç.

Ку операцире епĕ йертсе пыракани тултăм,—вĕççе хăпарас умĕн заданийе тĕплĕнрех турăмăр. Самолотсене икĕ отрйада уйăрнă. Пĕрремĕш отрйадăн—унта тăхăр бомбардировщик — Хаҥчжоури тĕп аеродром çине вĕççе каймала та ăна бомбăсемпе çĕмĕрмелеччĕ. Иккĕмĕш отрйадăн—унта сакăр самолот — Хаҥчжоури Çурçĕр-хĕвелтухăç станци çине тапăнмалаччĕ. Вăл—стратегилĕ пысăк узел. Епĕр пĕлнĕ тăрăх, станцире Йапони çарĕн вăрçă хатĕрĕсене тийенĕ тата çар чăçĕсем ларнă ешелонсем тăнă.

Пелăртнă вăхăтра вĕççе хăпартăмăр; бомбардировщиксем пĕрин хыççăн тепри сывлăша вĕççе хăпарчĕç. Аеродром тĕлĕнче пур самолотсем те пĕр çĕре пухăнчĕç, кашни отрйад уйрăмăн çавăл майлă вĕçмеле майлашăнчĕ, вара Хаҥчжоу çинеле вĕççе кайрăмăр.

Епĕр, çав уйăхсенче пĕтĕмпех тăван çĕршыва сыхлас, ăна çăлас, Йапони интервенчĕсенчен хӳтлес шухăшпа пурăннă хуласемпе йалсем çийĕпе, икĕ сехет хушши вĕçрĕмĕр. Инçетре епĕ фронт линине асăрхарăм: хула çунать. Епĕр сылтăмала пăрăнса вĕçме шут турăмăр. Пире йапонĕцсене постисем асăрхама, Китай авиацийĕн вĕçевĕ çинчен инçетри тыла пĕлтерме пултараççĕ. Епĕр малала та виçĕ пин çурă метр çӳлĕшĕнче вĕçрĕмĕр. Çанталăк йусанмарĕ, тĕтĕм пек йăсăрланакан çаплах тавракурăма хупласа тăрать. Анчах часах епĕр Хаҥчжоу заливне тата тĕтĕм пек йăсăрланакан витĕр палăракан хулана куртăмăр.

Пĕрремĕш отрйад, малтанах хатĕрленĕ плана пурнăçа кĕртсе, аеродром патне вĕçрĕ. Љотчиксем инçетренех ангар, самолотсене тата складсене курнă. Çавă ĕнтĕ Йапони авиацин бази пулнă. Иккĕмĕш отрйад чукунçул станци çине çул тытрĕ. Тӳпенеле перекен артиллери пеме пуçларĕ. Пире курчĕç, çавна епĕр çинчех ăнлантăмăр, мĕншĕн тесен—унта та кунта—хулан тĕрлĕ кĕтесĕсенче тупăсем пенĕ чухнехи çутă йалкăша-йалкăша кайат. Йапонĕцсем хăйсен тӳпене перекен пĕтĕм туппиçемпе пирĕн çине пеме пуçларĕç. Çапах вĕсенчен пĕри те тĕл тивретеймерĕç. Йапонин тӳпенеле перекен артиллерийĕ вăл куи пăшăрханса:—Китай самолочĕсене пеми ăнăççăр пулчĕ,—тĕл тивретни пĕре те пулмарĕ!—тесе пĕлтерчĕ пулмала.

Йапони аеродромĕнче хăватлăрах майпа хирĕç тăма шут турĕç пулмала: епĕр куртăмăр—самолот старта тухать, йапонĕцсем пире хирĕç истребителлĕ авиаци кăларса йараççĕ.

Йапони аеродромĕ çинче çав вăхăтра вăтăр ытла йăвăр самолотсем, штурмовиксем тата истребителсем пулнă. Епĕр ĕнтĕ çӳлтен пĕтĕм авиаци базине куртăмăр. Китай љотчикĕсем Йапони аеродромĕ çинче!

Ман самолотăн штурмăнĕ çĕр килограм йăвăрĕш бомбă пăрахрĕ. Ун хыççăн пирĕн пур самолотсем çинчи штурмăнсем те бомбăсем пăрахрĕç. Пĕр самантрах Йапони аеродромĕ çара тĕтĕмпе тата çулăмпа витĕнчĕ. Епĕр, тӳпенеле перекен артиллери пенине пăхмасăр, çаплах бомбăсем пăрахрăмăр. Аеродром çине, ангарсем, самолотсем тата складсем çине çĕр килограмлă аллă тăватă бомбă, осколкăлă тата вут тивертекен çĕр те ултă бомбă пăрахнă хыççăн, пĕрремĕш отрйад сылтăмала çаврăнма пуçларĕ. Заданийе чаплăн пурнăçа кĕртнĕ, базăна таврăнма йурать. Штурмăнсем пĕлтереççĕ: пирĕн бомбăсем—пит тĕл тивнĕ!

Кайала вĕççе кайма пирĕн тинĕс çинеле вĕççе çаврăнмалаччĕ. Пирĕн самолотсен бакĕсенче горючи нумаййчĕ-ха, епĕр горючи çитмессишĕн сахал пăшăрханнă. Епĕр тинĕс йенеле вĕççе çаврăннă чухне йапонĕцсен тăхăр истребителĕ вĕççе хăпарчĕç, вĕсем заплас аеродромра тăнă пулмала; вĕсем пирĕн çине атакăлама тытăнчĕç. Кунта вара пирĕн стрелокпулеметчиксем хăйсен искусствине, маçтăрлăхне тата калама çук пысăк паттăрлăхне кăтартрĕç. Пирĕн стрелоксем йапонĕцсен истребителĕсене—тĕл пыракан, талкишпех вĕçекен пульăсемпе хупласа хучĕç. Йапонин икĕ истребителне персе антарчĕç, вĕсем чул пекех çĕреле ӳкрĕç. Вĕсем пĕтни çавă пулчĕ. Йапонĕцсен ытти çичĕ истребителĕ çав самантрах кайала—хула çинеле çаврăнчĕç, вара епĕр вĕсене курсан çухатрăмăр. Анчах вĕсем часах каллех курăнчĕç,—бомбардировщиксен иккĕмĕш отрйачĕ çине тапăнасси курăнчĕ. Епĕр Хаҥчжоури Çурçĕр-хĕвелтухăç станци патне вĕççе кайса, иккĕмĕш отрйадпа пĕрлешме шут турăмăр.

Çав вăхăтра пирĕн отрйадра пĕр самолотăн моторĕ кăлтăклă ĕçлекен пулчĕ. Бомбардировщик пирĕнтен йула пуçларĕ. Вăл отрйадран тухрĕ те мана паллăпа пĕлтерчĕ: есĕ ман çине çаврăнса пăхмасăр, Йапонин вăрă-хурахĕсене малала пĕтер, терĕ. Анчах Китай авиацийĕнче иккек килсе тухсан йулташа пăрахма хăнăхман! Епĕр мĕнле кăна йăвăр лару-тăрăва лексен те йалан пĕрне пĕри пулăшатпăр. Епĕр стройран бомбардировщиксен пĕр звенине уйăртăмăр. Самолотсем, моторĕсене вăрахрах ĕçлеттерсе, йулакан машинăна çавăрса илчĕç те ăна фронт линийĕн тепĕр йенеле илсе кайрĕç. Айăккала çĕраллă километр вĕççе кайсан,—унта ĕнтĕ тек нимĕнле хăрушлăх та пулман пулас,—звено, моторĕ çаплах йĕркелĕ ĕçлемен самолота хăварнă та, çапăçу вырăнне таврăннă.

Пирĕн иккĕмĕш отрйад станци çине бомбăсем пăрахнă. Пирĕн љотчиксем чукунçул линийĕ патне вĕççе çитсен, вĕсем аеродром çинче пысăк пушар хыпса кайнине курнă та пĕрремĕш отрйад хăйĕн задачине пурнăçа кĕртнине ăнлансa илнĕ.

Чукунçул станцинче љотчиксем паравозсемпех тăракан икĕ состава курнă; вĕсене фронта кăларса йама пурте хатĕр пулнă. Виççĕмĕш состав Шанхайран станцине çитсе пынă. Отрйад командирĕ командă панă:

— Внимание—бомбить!

Малта пыракан самолотăн командирĕ ешелонсем çине бомбă пăрахнă. Унтан пирĕн пур самолотсем те станци çине бомбăсем пăрахма пуçланă. Çав вăхăтра Йапони истребителĕсем пырса тăрăннă, вĕсем епĕр аеродром çинче пулнă чухне пирĕнтен тарнăскерсем пулнă. Йапони истребителĕсем пирĕн бомбардировщиксем çине пырсах кĕнĕ, вĕсем çине сулахайран та, çӳлтен те атакă тунă. Отрйад командирĕ пит тĕрĕс решени йышăннă: хăйĕн пур самолочĕсене те истребителсене хирĕç тăма çаврăнă. Вăл истребителсемпе хăвăртрах çывхарма, атакă пит хăвăрт иртмеле тума йе, тĕрĕсрех каласан, Йапони истребителĕсене тапăнмали позицийе йышăнма парас мар тесе, атакă çиçĕм пек хăвăрт иртмеле тума шут тунă. Йапони љотчикĕсем пирĕн маневра трукăх ăнланса илеймен. Йапонĕцсем ăна кĕрсен, епĕр вара хуларан вĕççе тухса кайаттăмăрччĕ. Истребителсем пирĕн хыççăн хăваларĕç, кунта Йапони авиацийĕн тепĕр хавшак йенĕ палăрчĕ: истребителсем,—вĕсен çапăçури пĕтĕм хăвачĕ хăвăртлăх,—пирĕн бомбардировщиксене хăваласа çитме пултараймарĕç. Йапонĕцсем бомбардировщиксем хыççăн çĕраллă километр хушши хăваларĕç те, пире нимĕнле сийен те тăваймасăрах, Хаҥчжоуна таврăнчĕç.

Икĕ отрйачĕ те часах базăна—хамăрăн Нанчанри аеродрома таврăнчĕç, лайăххах анса ларчĕç. Љотчиксем çĕнтеру тунă йатпа пĕр-пĕрне саламлама пуçларĕç. Штурмăнсен докладĕнчен уççăнах курăнчĕ: бомбăсем тĕл тивнĕ, тапăннин резултачĕсем—пит лайăх пулнă! Епĕр çитнĕ хыççăн тепĕр чĕрĕк сехетрен аеродром çине пĕр моторĕ пăсăлнă самолот та вĕççе çитрĕ. Љотчик пĕр моторпах аеродром çине вĕççе çитрĕ, тĕлĕнмеле лайăх анса ларчĕ те, кула-кула машинăран тухрĕ.

Епĕр апат çиме тата канма кайрăмăр. Епĕр вăл кăç пурте пĕлми çывăртăмăр, мĕншĕн тесен пурте ывăнна пулнă. Тепĕр кун ирхине разведкă пĕлтерчĕ: епĕр Хаҥчжоури аеродром çине тапăнса тĕрлĕ самолотсене çирĕме йахăн, ангар тата складсене тĕп тунă. Хаҥчжоу станцинче вăрçă хатĕрĕсем тийенĕ тата çар чăçĕсем ларнă икĕ ешелона пĕтĕмпех тĕп тунă. Çав донесени хыççăнах епĕр генералиссимус Чан Кай Ширен салам илтĕмĕр, вăл пире тăван çĕршыва захватчиксенчен хăтарассишĕн пыракан кĕрешӳре малашне те ăнăçусем туса пыма ырă сунчĕ.

Анчах епĕр канма ĕлкĕреймерĕмĕр те, пирĕн пата „хăнасем" пычĕç. Чăн та ĕнтĕ, вăл хăнасем кĕтменскерсем теме çук. Йапони авиацийĕ пирĕн аеродром çине тапăнса, пире таврăма шут тытнă. Пирĕн пата вунă бомбардировщик тата вунсакăр истребител вĕççе пынă.

Йапони самолочĕсем Нанчан хули патне çывхарса пынă çĕре пирĕн аеродром çинче нимĕн те йулман. Фронтăн малти позицийĕсенчи постсенчех пире: Йапони самолочĕсем сирĕн пата вĕççе пыраççĕ, тесе пĕлтерчĕç. Йапони

Парти пурнăçĕ

Ӳссе пыракан коммунис

Промышлĕннаçра тата йалхуçалăхĕнче ленинла комсомол паттăрăн ĕçлесе пырат. Комсомолĕцсем Ленинпа Сталин парти ретне кĕрсе, ĕçхалăхне савăнăçлă лăпкă çурнăç кӳрессишĕн пĕтĕм вăйхалпа ĕçлеççĕ.

Комсомол ретĕнче çитĕннĕ лайăх çынсенчен пĕри—Иван Васильевич Васильев. Вăл парти организацинче паттăрăн ĕçлесе пыракан коммунниссенчен пĕри. Вăл Трак районĕнче Исакăвă йалĕнче чухăн çемйере çуралнă. 1918—1921 çç. йалти шкулта вĕренсе тухнă. Кайран таврари йалсенче кулаксем патĕнче чăптасем çапса пурăннă. 1929 ç. ленинла комсомол ретне кĕрсе йалти çамрăксем хушшинче хастарлăн ĕçлет. 1931 ç. Хĕрлĕ Çар ретне кайат. Вăл примерлă вĕренет. Унта кĕççн командир пулат, коммунисла парти кандитатне кĕрсе тавăрăнат. Йалта, колхозниксем хушшинче, паллă çын шутланат. Ăна колхоз бригадирне лартаççĕ, унтан йалпо председатĕлне суйлаççĕ. 1934 ç. Исакăвă йалсовечĕн председатĕлне суйлаççĕ. Пайан кунчченех çавăнта ĕçлет. Исакăвă йалĕ чиркӳлĕ йал пулнă. Çавăнпа та кунта халăх хушшинче политмассăлă ĕçе авлăн сарса йарса, хытă ĕçлеме тивнĕ. Иван Васильевич йалти тӳрĕ ĕçлекен çынсемпе лайăх çыхăну тытса, тăшманла çынсемпе хытă кĕрешсе пырат.

Ĕçре лайăх йертсе пынăшăн райĕçтăвком тата Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕ ăна темиçе хут премиленĕ. Иван Васильевича йалти кулаксемпе вĕсен тăванĕсем йунаса пурăннă, тепĕр чухне куç умĕнчех: нумайах йалсоветĕнче ĕçлеймĕнха, шăпу тулĕ, тенĕ. Кун пек тискер сăмахсем Иван Васильевича хăратман, вăл хăй тавра халăха тата та çирĕпрех йавăçтарса, йалти ĕçсене перле хастарлăн туса пынă. 1937 çулта вăл парти кандидатĕнчен члена куçнă.

4 çул çеç вĕренни çителĕклĕ маррине лайăх пĕлсе кулленхи пушă вăхăтсенче хăйĕн пĕлĕвне хăпартассишĕн хытă ĕçлет. 1936 ç. политграмăтă кружокĕнче, 1937—1938 çç. парти истори кружокĕнче вĕренет. Кулленхи çĕнĕ хыпарсене хаçат-журналсем вуласа пĕлсе пырат. „Правда", „Помощь партучебе", „Безбожник". хаçатсене, „Блокнот-агитатора", „Большевик" журналсене çырăнса илет. Ленин—Сталин произведенийĕсенчен тата ытти тĕрлĕрен кĕнекесенчен килĕнче хăй вальлли библиотекă тунă. Кирлĕ вăхăтра вĕсемпе йалан усă курат. Иван Васильевич йалти массă хушшинче темиçе çул ĕçленипе пĕрлех, хăйĕн пĕлĕвне те ӳстерсех пырат. Çак хушăрах йалти колхозниксем хушшинче авторитечĕ те ӳсет. ССРС Верховнăй совет суйлав вăхăтĕнче Исакăври суйлав комиççи председатĕлĕнче, РСФСР-па Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланă вăхăтра Исакăвă округĕнчи суйлав комиççи председатĕлĕн заместителĕнче пĕтĕм вăйа хурса ĕçлерĕ.

Иван Васильевич комсомол ретĕнче, массăлă ĕçре, парти ретĕнче вĕренсе, çирĕпленсе çитĕннĕ. Вăл районри çирĕп коммуниссенчен пĕри шутланат: Парти хушнă ĕçсене вăхăтра пурнăçлат. Йавăрлăхсем умĕнче чарăнса тăмаст, тытăннă ĕçсене пурнăçламасăр хăвармаст.

Закамский.

Парткабинет вĕренме пулăшат

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри парткабинет коммуниссемпе комсомолĕцсене тата совет активне вĕренӳ ĕçĕнче пысăк пулăшу парат. Парти кабинечĕ çумĕнче библиотекă пур, унта кĕнекесем нумай. Библиотекăран пурĕ 124 çын тĕрлĕрен кĕнекесем илсе вуласа тăраççĕ. Акă Çергей Петров коммунис Н. Островский, Салтыков-Щедрин, Жюль Верн çырнă кĕнекесене вуласа тухнă.

Кунсăр пуçне парти кабинетне коммуниссемпе комсомолĕцсем консультацине, хаçат-журналсем вулама та çӳреççĕ, унта çӳрени вĕсене ĕçре тата хăйсен пĕлӳлехĕсене хăпартма пулăшат.

ПСК(б)Парти кандидачĕ Иван Сорокин парти кабинечĕ çинчен çапла калат:

— Епĕ виçĕ хутчен парти кабинетĕнче консультацинче пултăм. Хам ăнланман ыйтусем çинчен парти кабинетĕнче ĕçлекен Вишневский йулташран ыйтса пĕлтĕм. Вара епĕ тинех унччен ăнланман ыйтусене ăнланса илтĕм. Халĕ унтанпа парти кабинетне час-часах çӳретĕп.

Парти кабинетĕнче картăсемпе альбомсем пур, вĕсемпе парти историне тата Сталинла Конституцине вĕреннĕ чухне анлăн усă кураççĕ, кабинета çӳрекенсем альбомсемпе питĕ интересленеççĕ, кирлĕ фактăсене хăйсен тетрачĕсем çине çырса илеççĕ. Кабинетра мĕн пурĕ 41 екземплар тĕрлĕрен хаçат-журналсем пур. Унта: „Большевик", „Спутник агитатора", „Блок-нот агитатора", „Колхозник", „Жизнь замечательных людей" журналсем тата тĕрлĕрен хаçатсем килсе тăраççĕ. Иртсе пыракан кашни хуçалăхла политикăлă кампанисем йачĕпе парти кабинетĕнче витринă организациленĕ. Халĕ правительствă Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне каларнă йатпа йатарласа витринă тунă.

Парти кабинетĕнче кашни кунах çынсем нумай пулаççĕ. Унта, пӳлĕме чечексем лартса, стенасем çумне тĕрлĕрен лозунгсемпе плакатсем тата картинăсем çапса илемлетнĕ.

Районри парти кабинетĕнче уйăхра икĕ хутчен пропагандиссен çеминарĕ, 4 хутчен парти историне вĕренмели кружок занятийĕсем, час-часах лекцисем пулса иртеççĕ. Парти кабинечĕ парти историне заочнă вĕренекенсемпе те ĕçлет, вĕсене ĕçре пулăшса пырат.

Районри парткабинетра çитменлĕхсем те çук мар-ха. Акă парти кабинечĕ вырнаçнă пӳлĕм ытла та пĕчĕккĕ. Унта парти историне вĕренмели кĕнекесем çителĕксĕр.

Парти кабинечĕ районри пуçламĕш парторганизацисенче политикăлă вĕренӳ ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлет теме çук-ха. Тепĕр çитменлĕх—вăл районра çитĕнӳсем пуррине кăтартса паракан диаграммăсем çукки пулса тăрат. Парти кабинечĕн çак çитменлĕхсене пĕтермеле.

Пр. Сатур.
Гр. Смирнов.

Партин 2-мĕш сйесĕ иртни 35 çул тултарнă тĕле

1938 çулти ийуль уйăхĕнче партин II-мĕш сйесĕ иртни 35 çул тултарат. ПСК(б)П Обкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕ партин II-мĕш сйесĕн решенисене вĕренме республикăри тата Шупашкар хулинчи парти активĕпе теорилĕ конференци иртерет.

Ийулĕн 22-мĕшĕнче, каçхине, 7 сехетре, Шупашкарта парти вĕренӳвĕн тĕп çуртĕнче Ахазăв йулташ („Красная Чувашия" хаçат редакторĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ) парти активне партин II-мĕш сйесĕ çинчен лекци вуласа парат.

Лекци итленĕ хыççăн, конференцире пулакансен заданире кăтартнă литературăпа килте хăйсем тĕллĕн вĕренмеле.

Конференци августăн 20—22-мĕшĕсенче пулса иртет. Конференцире партин II-мĕш сйесĕ çинчен Н. Çеменăв, Матвейĕв, Пожеданăв, Раскин, Ваструк йулташсем докладсем туса параççĕ. Ку докладсем тăрăх тухса калас текенсен ПСК(б)П Обкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайне пырса çырăнмала.

Шупашкарти парти вĕренӳвĕн тĕп çурчĕ докладчиксемпе конференцире тухса калакансем вальли августăн 5—10—15-мĕшĕсенче кăнтăрла иртсен 3 сехетрен пуçласа каçхине 9 сехетчен консультацисем иртерет.

Партин II-мĕш сйесен решенисене вĕренекен теорилĕ конференцине йертсе пыма Ахазăв йулташа хушнă.

Августăн 20—23-мĕшĕсенче кашни районрах парти активĕн пухăвĕсем пулса иртмеле. Ку пухусенче партин II-мĕш сйесĕ тата вăл историре мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен вĕренмеле. ПСК(б)П Обкомĕ районсене йама докладчиксем уйăрнă.

Аниçимăв йулташа халăх тăшманĕсен шутне кĕртни тĕрĕс мар

1937-мĕш çулхи нойаберĕн 23-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн „Парти активĕн пухăвĕ" йатлă умстатйинче Аниçимăв Иван Аниçимăвича тăшманла çынсен шутне кĕртнĕ. Аниçимăв йулташа халăх тăшманĕсем шутне кĕртни тĕрĕс мар.

Налог агĕнчĕсен тĕлсĕрлĕхĕ

ВĂРНАР. (Хамăр корр.) Массăлла ăнлантару ĕçне кирлĕ вырăна лартнă йалсоветсенче укçа-тенкĕ пухас ĕç те лайăх пулса пырат. Мамалай йалсоветĕнче финанс çекци руководителĕ Макçимăв йулташ тăрăшса ĕçленипе укçа-тенкĕ пухас плана кашни кварталтах срукчен малтан тултарса пыраççĕ. Çекцин ĕç планĕ пур. Макçимăв йулташ çекци членĕсене задани парат. Заданине мĕнле пурнăçланине çекци членĕсене перле пухса тĕрĕслет. Кăтартулă ĕçлекен çекци членĕсене хăйсен ĕçĕсем çинчен калаттарса, ыттисене те лайăх ĕçлеме вĕрентсе пырат. Финанс çекци ĕçĕсем çинчен йалсоветри тата колхозсенчи стена хаçачĕсем вăхăтра çутатса пыраççĕ.

Кольцовкă йалсовечĕ те укçа-тенкĕ ĕçĕпе малта пырат, вĕсем налог, страховкă, культсбор укçисене вăхăтра тӳлесе татнă. Халĕ йалсоветра çĕнĕ займшăн укçа пухас ĕç пуçланнă. Йалсовет председатĕлĕ Йерошин, налог инспекторĕ Никифăрăв йулташсем укçа-тенкĕ пухас плана вăхăтра тултарас тĕлĕшпе массăлă-ăнлантару ĕçне йĕркелĕн туса пыраççĕ.

Анчах укçа-тенкĕ пухас ĕçпе пур вырăнсенче те пĕр пек тăрăшса ĕçлемеççĕ-ха. Айкăш йалсоветĕнче (председатĕлĕ— Çеменăв, финанс çекци руководителĕ—Кулайевский йулташсем) 1937 çулхи декаберĕн 20-мĕшĕ тĕлне пухса пĕтермеле пулнă налог укçине 1462 тенкĕ халĕ те пухман, культсбор укçи 3.250 тенкĕ, страховкă укçи 687 тенкĕ пухса çитермен. Ку участкăра районри финанс пай инспекторĕсем час-часах улшăнса пынă. Йанвар уйăхĕнче Айкăш йалсовечĕн участкинче финанс инспекторĕнче Иван Квасăв йулташ пулнă. Вăл хăйне шаннă ĕçе тӳррĕн пурнăçлассишĕн тăрăшман. Ăна кирлĕ пек ĕçлеменшĕн ĕçрен каларсан, инспектăра Павлăва илнĕ. Павлăв та Квасăв çулĕпех пырса, ĕçе йапăхтарнă. Халĕ ку участкăра районри финанс пайĕн инспекторĕ çук.

Аçăм Çырми йалсоветĕнче (йалсовет председатĕлĕ Куракăв йулташ, финанс çекци руководителĕ Чернов йулташ) 2-мĕш квартăлта пухмала пулнă йалхуçалăх налогне 429 тенкĕ, культсбор укçи 728 тенкĕ халĕ те пухса пĕтермен.

Укçа-тенкĕ пухас ĕç йапăх пыни налог агĕнчĕсем финанс çекци членĕсемпе перле ĕçлеменнинчен нумай килет. Кушлавăш йалсоветĕнчи налог агенчĕ Артемйĕв йулташ йалта йалаçах пулат пулсан та, нихăçан та йалсоветри финанс çекципе перле ĕçлемест. Вăл финанс çекципе пĕрле ĕçлеменнине пула ĕнтĕ йалсоветра иртнĕ çулхи займ укçине 700 тенкĕ пухса çитермен. Кăçалхи çĕнĕ займшăн укçа пухас тĕлĕшпе йалсоветра нимĕн те ĕçлемеççĕ.

Камаш йалсоветĕнчи налог агенчĕ Большаков йулташ займ сарас ĕçрен паранса çӳрет. Халăха займ çинчен ăнлантармалли вăхăтра вăл йурийех туйа кайса ĕççе ӳсĕрĕлсе çӳренĕ.

Район финанс планне тултарас йĕнĕпе республикăра кайа йулчĕ. Районра 2-мĕш квартăлра пухмала пулнă колхозсенчи тупăш налогне 7.000 тенкĕ, культсбор укçи 49.300 тенкĕ, йалхуçалăх налоге 15.200 тенкĕ, страховкă укçи 5.000 тенкĕ халĕ те пухса çитермен.

Районри финанс пайĕнче ĕçлекенсемпе, налог агĕнчесем массапа, финанс çекцисемпе кулленех çыхăнса ĕçлесе, çитĕнӳсем тăвассишĕн большевикла ĕçлемеле.

В. Васильĕв.

Колхозниксем 250—300 шер тенкĕлĕх çырăнчĕç

ЙĔТĔРНЕ. Палтайри Буденный йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх займа хавалланса çырăнчĕç. Чи малтанах Мордарайкин йулташ 300 тенкĕлĕх, Степанăв йулташ 250 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Çĕнĕ займа 100—150 тенкĕшер çырăнакансем нумай пулчĕç. Колхозĕпе 3400 тенкĕлĕх çырăннă.

М. Аниçимăв.

СĔНТĔРВĂРРИ. Ийулĕн 15-мĕшне районра çĕнĕ займшăн 2977 тенкĕ укçа пухнă. Вăл шутран Нерйадаври „Красный Волгарь" колхоз членĕсем хушшинче 327 тенкĕ те 88 пус, Тутаркассинчи „Моряк" колхозникĕсем хушшинче 400 тенкĕ укçа пухнă.

Халĕ çĕнĕ займшăн укçа пухас ĕç вăйланса пырат.

Гр. Смирнов.

Йалсовет работникĕсем ыттисемшĕн пример пулмала

Чашлама йалсовечĕ (Куславкка р.) займ çырăнассипе ытти йалсоветсенчен кайа йулчĕ. Пайанхи куна йалсовечĕ 500 тенкĕлĕх çеç займ сарнă. Уполномоченнăйсем—Петров тата Васильĕв Тарас хăйсем те пĕр пуслăх займ çырăнман. Çавăн пекех вĕсем займ вырнаçтарас тĕлĕшпе те нимех те туман.

Йалсовет аппаратĕнче ĕçлекенсем те пример кăтартма шутламаççĕ. Вĕсем ку таранччен те займ çырăнман.

М. Семенăв.

Урам комитечĕсен паха ĕçĕ

ШУПАШКАР. Хулари урам комитечĕсем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне сарас тĕлĕшпе активлăн ĕçлеççĕ. Вĕсем килхуçи хĕрарăмсем хушшинче çĕнĕ займа 16720 тенкĕлĕх сарнă. Уйрăм комитетсем займ сарас тĕлĕшпе питех те лайăх примерсем кăтартаççĕ.

Карл Маркс урамĕнче 1205 тенкĕлĕх, Плеханăв урамĕнче 1135 тенкĕлĕх, Герцăн урамĕнче 1200 тенкĕлĕх сарнă. Ку урамсенче чылай килхуçи хĕрарăмĕсем 100 шер тенкĕшер займ çырăнса укçине те çавăнтах тӳлесе татнă.

Çмирновă йулташ (Ленинград урамĕ) 100 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те парса татнă. Павленко, Йăкăвлĕвă, Королевă йулташсем (Плеханăв урамĕ) çĕнĕ займа 100-шер тенкĕлĕх çырăннă.

Канашлăвă пынă активлă ĕçлекен килхуçи хĕрарăмĕсем займ сарас тĕлĕшпе начар ĕçлекен урам комитечĕсене пулăшма пулчĕç. Кайа йулса пыракансем пур-ха. Октябĕр, Пушкин, Чăвашсойуз, Чернышевский урамсенче, Коммунальнăй слаболара тата Кирăв поçолкинче килхуçи хĕрарăмсем хушшинче займ вырнаçтарма тапранман та. Килхуçи хĕрарăмсем—активисткăсем Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн 1-мĕш Çессине килхуçи хĕрарăмсем хушшинче займа ăнăçлăн вырнаçтарнипе кĕтсе илме пулчĕç.

И. Филиппăв.

Ăнăçлăх çукки—пĕтĕмпех руководителсенчен килет

ЙĔЛЧĔК (Хамăр корр.) Ийулĕн 17-мĕшне илсен районри служащисемпе колхозниксем, ĕççынни йединоличниксем Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне 224 пин тенкĕлĕх çырăннă. Районри ĕççыннисем правительствă займ кăларнине хавасăн, пысăк кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Малтанхи кунсенчех займ çырăнасси лайăх пынă.

Анчах йулашки кунсенче районри руководителсем çак ĕçе тивĕçлипе хакламаççĕ. Ийулĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа, 6 кун хушшинче, çĕнĕрен 32 пин тенкĕлĕх çеç займ вырнаçтарнă.

Районра иртнĕ çулхи займа 277 пин тенкĕлĕх сарнă. Çĕнĕ займа унтăн ытларах сарма пур условисем те пур. Кĕçĕн Тайапа колхозĕнче иртнĕ çулхи займа 2.975 тенкĕлĕх çырăннă пулсан, кăçал 3.650 тенкĕлĕх çырăннă. Çавăн пекех Аслă Тайапа, Ырăм Хăва колхозĕсен колхозникĕсем те иртнĕ çулхинчен чылай ирттерсе çырăннă.

Малта пыракан колхозсенче займ укçи пухаççĕ. „МОПР" колхозра 685 тенкĕ, „Сатурн" колхозра 2.390 тенкĕ, „Ново Чурино"—614 тенкĕ, „Ишчерйаково"—700 тенкĕ, „Звезда"—695 тенкĕ, „Хунав"—800 тенкĕ, Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозра 1.265 тенкĕ укçа пухнă.

Ийулĕн 17-мĕшне илсен çак асăннă йалсоветсемпе колхозсенче 11 пин тенкĕ укçа пухнă.

Ку тĕслĕхсем çĕнĕ займа иртнĕ çулхи чухлĕ кăна мар, ытларах та сарма май пуррине кăтартаççĕ. Займ çырăнасси ăнăçлă пыманни пĕтĕмпех руководителсенчен килет. МТСт.нийинче 6 бригадăра тракторисçене займ çырăнас ĕçе хутшăнтарман. Парти райкомĕпе райĕçтăвком йалсоветсене займ сарас ĕçре пулăшма уйăрнă хăшпĕр уполномоченнăйсем ку вăхăта çитсе те йалсене пырса курман. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăй кантурĕнче ĕçлекен Бадайĕва Ентепе йалсоветне пулăшма хушнă, вăл унта пыман та. Ентепепе Тĕмер йалсовечĕсем займ сарас йĕнĕпе чи кайа йулнă йалсоветсем шутланаççĕ.

Т. Майорăв.

Çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илетпĕр

КАНАШ. Вакунсем йусакан савăтри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем августăн 30-мĕшĕнче пулакан Пĕтĕм Сойузри чукунçул транспортĕнче ĕçлекенсен кунне производствăра çĕнĕ ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илессишĕн социалисăмла ăмăртăва пуçарса йачĕç. Чылай рабочисем хăйсем çине илнĕ обйазательствăра кулленхи нормăна 200-шер процент тултарма, ĕç тухăçлăхне хăпартма, тавар пахалăхне татах та лайăхлатма пулаççĕ.

Хашпĕр тĕслĕхсем тăрăх илнĕ обйазательствасем ытлашшипех пурнăçланса пыни курăнат. Ийулĕн 15-мĕшĕнче урапа цехĕнчи Лукийанăв, Муртазин, Федарăв йулташсем кашнийех нормăсене 300-шер процент, Иванов, Никитин, Клочков йулташсем 400-шер процент тултарчĕç.

Йавăç касакалакан цехра ĕçлекен Инспектăрава, Данилава, Прокопйев, Цапина йулташсем те кулленхи нормăсене 290-шар процент тултарса ĕçлеме пуçларĕç. Механически цехри Тимофеев, Чернов, Макарăв йулташсем виçшер нормă тултараççĕ.

— Епĕр Пĕтĕм Сойузри чукунçул транспортĕнче ĕçлекенсен кунне хамăран уйăхри плана ытлашшипех тултарнипе кĕтсе илетпĕр,—теççĕ рабочисем.

Д. Иванов.

Ергелти стахановĕц

Чарпуçĕнчи (Шăхасан р.) „Стахановĕц" промысла ертеленче ĕçлекен Никита Артемйĕв йулташ ертел членĕсем хушшинче пысăк авторитетпа усă курат.

Пĕр ĕçе хушсан парăнса, ăна тумасăр иртерсе йани Артемйевăн нихăçан та пулман. Мĕн хушнине, вăхăтра, пысăк тухăçлăхпа пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлет. Çапла ĕçленерен те ĕнте вăл кашни кунах чăпта çапас плана 150—200 процентшер тултарса пырат. Çак йулашки вунăкунлăхра нормăна 230 процентшер тултарса пыма пуçларĕ. Вăл туса кăларакан тавар пахалăхĕ йалан лайăх.

Артемйĕв йулташ Ватам Бокашăвари промысла ертелти чи лайăх стахановĕцпа Коротков йулташпа ăмăртса ĕçлет. Илнĕ обйазательствăсене ытлашшипех пурнăçласа пырат. Çак кунсенче Артемйĕв йулташ чăпта çапма икĕ çынна вĕрентсе кăларчĕ. Хăйĕн пĕлӳне ӳстерессишĕн те йаланах тăрăшат, пушă вăхăтра хаçатсем, кĕнекесем вулат.

Ал. Иванов.

Çĕнĕ ĕçсене куçарнă çынсем

Кăçалхи çул Чăвашпромсойуз çистеми йĕнĕпе чи лайăх стахановĕцсемпе ударниксене, отличниксене пĕтĕмпе 50 çын ытла тĕрлĕрен йертсе пырас ĕçсене куçарнă. Çав йулташсем хăйсене шанса панă тивĕçлĕхе вирлĕн пурнăçласа пыраççĕ.

Улатăрти „14 лет Октября" ертелте производствă пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Василий Азлин февралĕн 1-мĕшĕренпе ертел правлени председатĕлĕнче ĕçлет. Вăл ĕçлеме пуçланăранпа ертел йаланах плана тултарса пыма пуçларĕ. Çурçуллăх плана 126,1 процент тултарнă, ĕç тухăçлăхĕ ӳсрĕ. Уйрăмăнах, ĕç дисциплини лайăхланнине палăртмала. Дисциплинăна йĕркеленĕрен те ĕнтĕ ертел тухăçлă ĕçлеме пуçларĕ.

ПСК(б) Парти членĕ Владимир Дергунов чылай вăхăт хушши ертелте рйадовой рабочи пулса ĕçленĕ. Кăçал ăна Кивĕ Котакри Чапайĕв йачĕпе тăракан промысла ертелĕн правлени председатĕлне суйланă. Чăн малтанах вăл ĕç вырăнĕсене тĕрĕс йĕркеленĕ, дисциплинăна çирĕплетнĕ. Çапла ĕçленĕ май ку ертел промфинплана тултарассипе хальхи вăхăтра чи малта пыракансенчен пĕрийĕ шутланат, çурçуллăх плана ертел 223,9 процент тултарчĕ.

Йертсе пырас ĕçсене лартнă çынсем ĕçре паха примерсем кăтартаççĕ. Вĕсен ĕçĕсенче чăн-чăн конкретлăх, оперативлăх курăнат.

Н. Давыдăв.

Матăксем тăрăшса ĕçлеççĕ

ЕЛĔК. Матăк йалсоветне кĕрекен колхозсем çулйĕр строительствинче пĕр-пĕрипе социалисăмлă ăмăртса ĕçлеççĕ. Хăйсене панă плана вĕсем ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Çулсем йака та лайăх, путăк вырăнсем çук. Çак кунсенче кунти колхозсем тата 97 кубла метр хăйăр турттарса çул çине сарчĕç. Матăкпа Çулавăç йалĕсем хушшинче çĕнĕрен пĕр кĕпер турĕç.

Ив. Кутузăв.

самолючĕсем хăш минутра ăçта вĕçнине епĕр тĕрĕс пĕлсе тăтăмăр. Нанчан хули районĕнче вĕсене миçе минутран кĕтмелине тĕп тĕрĕс шутласа кăлартăмăр.

Тревогă турĕç, вара пирĕн самолютсем пурте запаслă вырăнсене вĕççе кайрĕç. Истребителсем çеç йулчĕç, вĕсене аеродрома тата хулана сыхлама хушнă.

Акă ĕнтĕ, Нанчан хули çинче Йапонин йăвăр бомбардировщикĕсем курăнчĕç. Пирĕн истребителсем тăшмана атакăлама пуçларĕç. Анчах çав вăхăтра Йапони истребителĕсем пырса çитрĕç те, атакă тума чăрмантарчĕç. Йапони тата Китайăн истребителĕсем сывлăшра çапăçма пуçларĕç. Калас пулат, истребительнăй авиацин сывлăшри çапăçăвĕнче кам̆ăн хăвачĕ тата нервисем çирĕпрех, кам çĕнтересси вĕçĕмсĕр шанат—çавă çĕнтерет. Акă икĕ самолют пĕр-пĕрин çине хирĕç пыраççĕ, вĕсем пырса çапăнассăнах туйăнат. Кирек йепле пулсан та çĕнтересех текенни, вăл тăшман самолютне мĕнле те пулин урăх ăнăçлăрах маневрпа çĕнтерейменсен, йулашкинчен тăшман самолютне пырса çапăнат.

Пирĕн тата йапонĕцсен самолючĕсем хушшинче Нанчан хули çинче пулнă çак çапăçура нервăсем тата ирĕк—китайĕцсен çирĕпрекки курăнчĕ. Хула çинче Йапонин виçĕ истребителне вут хыпса илчĕ. Пире кайран: халăх çав вăхăтра алă çупса йачĕ, тесе каласа пачĕç,—епĕр хамăрăн аслă халăхăн ирĕкне пурнăçа кĕртнĕ.

Çав вăхăтра аеродром çинче виçĕ пин метр çӳлĕшĕнче икĕ истребител пĕр-пĕрипе çапăçма пуçларĕç. Вĕсем пирĕн вăрмасăр пĕр-пĕрипе тытăçнă, сывлăшри пĕтĕм çапăçу мĕнле вĕçленесси вĕсен çапăçăвĕнчен килне пекех туйăннă. Çав тытăçăва урăх никам та хутшăнман, Китайăн кашни лётчикĕ хăйĕн рольне пурнăçа кĕртнĕ, хăйне хушнă хула участкине сыхланă. Часах пурте курнă: Китай истребителĕ йапонĕцран çӳлерехе хăпарнă та ăна айала хăварнă. Пирĕн лётчик ăна çĕр çине хăваласа пынă. Йапони истребителĕ Китай лётчикĕн аллинче пулнă, мĕншĕн тесен вăл вăхăта иртерсе йанă, пирĕн ырă лётчик хăйулă, калама çук паттăр маневр туни умĕнче кайала чакнă. Йапонĕц çапах та хăйне çăласшăн пулнă, самолютне çуначĕсем урлă çаврăнă,—айалала чăмса çапăçуран тухасшăн пулнă пулмалла. Анчах пирĕн лётчик Йапони истребителĕ мĕн тăвасшăннине ăнланса илнĕ те ăна çĕр çум нелех хăваласа пынă. Йапони лётчикĕ самолютне çуначĕсем урлă çаврăрса ĕлкĕреймен те, çапла Китай халăхне высший пилотаж фигурине туса кăтартайман, самолют çĕр çумне перĕннĕ те çавăнтах сирпĕнсе кайнă. Пирĕн истребител çав тележен—Йапони самолючĕ сирпĕнсе кайнă çĕртен—йарăнса вĕççе иртнĕ те, çӳле вĕççе хăпарнă, хăйĕн позицине йышăннă.

Сывлăшри пĕтĕм çапăçу çирĕм минут хушши пынă. Йапони кашни лётчикĕ çапăçуран хăй пĕччен тухнă. Йапонĕцсем пĕр-пĕрне пăрахса-пăрахса хăвархĕç. Вĕсем пирĕн территорирен пит хăвăрт кайрĕç. Йапони истребителсемне пĕрле килнĕ тăхăр бомбардировщикĕсене те пирĕн истребителсем атакăланă. Йапони лётчикĕсем аеродром çине вĕççе çитейме сĕрех, хăйсен айĕнче нимĕнле тĕллев курмасăрах, бомбăсем пăрахма пуçларĕç. Йапонĕцсем пăрахнă бомбăсем пурте масар районне лекнĕ. Тепĕр кунне епĕр çав вырăнта ишĕлнĕ вилĕ шăтăкĕсене, çĕмĕрсе пĕтерне памйатниксемпе гробницăсене куртăмăр.

Самурайсем (йапонĕцсем) мĕн тери хăватлă иккен—вилнисем çине бомбăсем пăрахаççĕ!

Çапăçу хыççăн пирĕн лётчиксем аеродром районĕнче йапонĕцсене персе антарнă ултă истребителне тупрĕç. Тепĕр кунтан пире: Нанчанран аллă километрти кӳлĕсенче йапонĕцсен тата икĕ истребителне тупнă, тесе пĕлтерчĕç. Çапăçура çав икĕ лётчик аманнă пулас, вĕсем хăйсен базине вĕççе çитесшĕн пулнă, анчах вĕсем çавна тăваймăн...

Каçхине епĕр хамăрăн аеродромра пухăнтăмăр. Унта епĕр икĕ кун хушшинче пулса иртнĕ икĕ çапăçу результачĕсене шутласа пăхрăмăр. Пĕр çапăçăвĕ—Ханьчжоу хули çинче, тепри—Нанчан хули çинче пулнă. Икĕ çапăçăвĕнче те епĕр çĕнтертĕмĕр. Епĕр инçене кайса йăвăр тапăну тунă пулин те пирĕн пасăлни нимĕн те пулман. Йапонĕцсем пирĕн аеродром çине ленкеймен те, пирĕн лётчиксем вĕсене авиацин пысăк соединенисене çĕмĕрсе тăкрĕç. Пирĕн истребителсем йапонĕцсене Нанчан хулине кĕртмерĕç, халăх пире çавăншăн йаланах тав тăват. Епĕ ăна вунщар çулсем хушши пĕлекен пĕр старик пĕрехинче мана çапла каларĕ:

— Ĕсĕ пирĕн авалхи халлапа пĕлетĕн: „Кам пĕлĕт çине лекет, вăл турра çĕнтерет". Пирĕн лётчиксем ĕнтĕ пĕлĕт çине хăпарнă, çавăнпа вĕсем йаланах, пур çĕрте те çĕнтереççĕ... Акă мĕн тума пултарат ĕçкалăхĕ.

(Китай чĕлхинчен куçарнă).
Епĕр „Правда" хаçатран куçарса пичетлетпĕр.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Левант фронтĕнче пур районсенче те хĕрӳлĕ çапăçусем пыраççĕ. Интервентсен авиацийе тата танксемпе вăйлан усă курса тунă пур атакисене те республиканецсем çирĕппĕн çĕмĕрсе тăраççĕ. Пăлхавçăсен Барракас районĕнчи, Теруэль—Сагунто тăрăхĕнчи атаки ăнăçсăр пулнă. Республиканецсем фашиссене хирĕç калама çук çирĕп тăраççĕ.

Левант фронтĕнче пулнă сывлăшри çапăçура республика ыотчикĕсем фашиссен 13 самолетне персе антарнă. Республиканецсен 3 истребителĕ пĕтнĕ.

Ыран июлĕн 19-мĕш тенĕ çул çĕрле фашиссен авиацийĕ Барселона çине тата унăн хĕррисене икĕ хутчен бомбăсем пăрахнă. Барселонăра бомбă тивнипе собор сийенленнĕ, вăл собор историпе архитектура тĕлĕшĕнчен пит те хаклă тăракан йăпала.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Вăтаçĕр Китайра, йапонецсем Ханькоу çине пысăк наступлени тума пуçласса кĕтнĕ май Китай командованийĕ çак пит пысăк çапăçăва хатĕрленес тĕлĕшпе йулашки кунсенче ĕçсене туса çитерет. Йапони çарĕсене хаь те çĕнĕ вăйсем илсе пыма чарăнмаççĕ.

Июлĕн 18-мĕшĕнче Йапонин икĕ çар карапĕ авиаци пулăшнипе Пайанху кӳллине кĕме хăтланса пăхнă.Китай артиллерийĕ йапонецсене йуханшыв тăрăх кайала хăваласа йанă.

Йулашки ернере Йапонин 10 çар карапне путарнă, вĕсенчен 4-шне Ханькоу патĕнче.

Июлĕн 18-мĕшĕнче йапонецсем катайсем хытă çирĕплетнĕ Цзуцзйан хули (Йанцзы йуханшывĕ хĕрринче, Ханькоуна кайакан çул çинче вырнаçса тăракан хула) çине хайăрран бомбăсем пăрахнă. Хулан чылай пайĕ çĕмĕрĕлнĕ.

Июлĕн 19 мĕшĕнче Йапонин 37 бомбардировщикĕ Ханькоу хули çине икĕ сехет хушши бомбăсем пăрахса çӳренĕ. Бомбăсенчен пĕри театр çурчĕ çине ӳкнĕ, вăл театр çуртĕнче 500 çын пулнă. Йапони самолечĕсем çавăн пекех аэродром çийĕпе вĕçсе пулеметсенчен персе çӳренĕ.

Китайăн çурçĕр йенĕнче, Шаньси провинции кăнтăр пайĕнче йулашки кунсенче хайăр çапăçусем сăрăлса кайнă.

Кăнтăр Китайра июлĕн 18-мĕшĕнче, Йапонин авиацийĕ Кантон çине пырса 60 бăсем пăрахнипе 100 çын амăннă тата вилнĕ.

(ТАСС).

Йут çĕршыв хроники

* Июлĕн 19-мĕшĕнче Греципе çĕр вăйлан чĕтреннĕ. Оропоса Афины хулисем хушшинче темиçе çурт арканнă. Нумай çын аманнă тата вилнĕ. Оротосри тĕрмен стенисем çĕмĕрĕлнĕ, унти виçĕ салтак вилнĕ.

* Çак кунсенче Польшăн нумай районĕсем çийĕпе вăйлă çил-тăвăл иртсе кайнă. Чăх çăмарти пысăкĕш пăр çуса хирти тырăсене пĕтерсе, улма-çырла йăвăçĕсене хуçса ватса хăварнă. Çилтăвăл пысăк сийен кӳнĕ.

* Испани халăхĕ Италипе Германи интервенчĕсене хирĕç паттăрăн кĕрешме пуçланăранпа икĕ çул тулнă йатпа Нью-Йоркра нумай пин çынлă митинг пулса иртнĕ. Çав митингра республикăйă Испанине пулăшма укçа-тенкĕ пухнă. Пурĕ 10.000 доллар пуçтарнă. (ТАСС).

Учителсен çуллахи канăвĕ

Чăваш республикĕнчи пуçламĕш тата вăтам шкулсенче вĕрентекен учителсен сойузĕн облăçри комитечĕ кăçал 2 406 учителе канмали çуртсемпе санаторисене йама 524.700 тенкĕ укçа уйăрнă. Вăл шутран госстрах шучĕпе 1.560 çынна 263.100 тенкĕлĕх тӳлевсĕр путевка пана.

Инçетри курортсемпе санаторисенче 138 учитель сывалаççĕ.

Канмали çуртсенче 820 çын канаççĕ.

Экскурсисене 456 учитель кайаççĕ. Вĕсенчен Ленинграда 185 çын, Мускава—180, Атăл çинче çӳрекен канмали пăрахутпа Горький—Астрахань хушшинче—85, Кавказа—10, Украинăна—40, Мичуринска—25, Крыма—10, Хусана—20, Горькине—5 çын кайаççĕ.

560 учитель вырăнти экскурсине—Шупашкара, Çĕмĕрлене, Канаша, Улатăра тата ытти çĕре те кайаççĕ.

Учителсен ачисене канма тата сывалма 188 ача валли 60 пин тенкĕ уйăрнă. Вăл шутран Каршлăхри ачасен санаторине 32 ача кайаççĕ. Пионер лагерĕсене 51 ача, Артека 1 ача, ыттисем республикăри канмали çуртсене кайаççĕ.

14 ачана Сочие, 5 ачана Атăл тăрăх экскурсие йараççĕ.

Медицинă йенчен васкавлă пулăшу памали çĕнĕ йĕрке

ССР Сойузĕн Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ медицинă йенчен васкавлă пулăшу парас тĕлĕшпе çĕнĕ йĕрке тунă.

Васкавлă пулăшун çынна инкексинкек пулсан кăна мар, çын сасартăках йăвăр чирлесен, хирурги йенчен пит те хăвăрт пулăшу пама кирлĕ чухне, йун хыгă йухса тăнă чухне, çын сасартăках тăнне çухатнă чухне тата ыт. тухса каймала.

Васкавлă пулăшу машинин инкек синкек пулса иртнĕ вырăна, машинăна пыма чĕннĕ хыççăн виçĕ минутран кайа мар тухса каймала. Васкавлă пулăшу халĕ те лашасемпе çӳрекен пысăк мар хуласенче, кареттăн пилĕк минутран кайа йулмасăр тухса каймала.

50 пин çынна çити халăх пурăнакан хуласенче васкавлă пулăшу пункчĕсем йăвăр хĕрарăмсене ача çуратмалли çуртсене леçсе хăварма тивĕçлĕ. Питĕ те кирлĕ вăхăтсенче, çав пунктсем 10 километр таран сывлăхри йалсене те кайса унти çынсене пулăшу пама тивĕçлĕ.

Мĕн пур пысăк хуласенче васкавлă пулăшу станцисем çумĕнче справкăсем паракан бюро организациленĕ. Вăл бюросем инкек-синкек курнă çынсем çинчен, вĕсене мĕнле пульницăна вырăтарни çинчен тата ытти çавăн пек справкăсем памала.

Выльăв укçисене тӳлени

ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займăн иккĕмĕш тиражĕнче выльăса илнĕ облигацисен номерĕсене пичетленĕ хаçатсене алла илсенех Шупашкарти перекет кассисем выигрышсем тӳлеме пуçланă. Пĕрремĕш тиражри пекех, çак иккĕмĕш тиражра та выльăса илнисем нумай.

Çапла, хулари виçĕ перекет кассисем тăрăх июлĕн 20 мĕшĕнче кăна 4.870 тенкĕ выльăв укçи тӳленĕ. Вăл шутран: Тĕп перекет касси 2.572 тенкĕлĕх 25 выигрыш тӳленĕ, вăл шутран пĕр выигрыше 400 тенкĕлĕх пулнă. Çыхăну çуртĕнчи перекет касси малтанхи кун 1.797 тенкĕ тӳленĕ, пĕр выигрыш 300 тенкĕлĕх пулнă. 60/1-мĕш № лĕ перекет касси 500 тенкĕлĕх 5 выигрыш тӳленĕ.

Ив. Е.

Пионерсем—лагерьсенче

КАНАШ. Пионерсен лагерĕ вакунсем йусакан савăтран 12 километрта. Çавал шывĕ хĕрринче вырнаçнă. Ачасем кунта икĕ сменăпа канмалла, кашни сменăра 100 шер ача пĕрер уйăх канат. Лагере ачан йĕркеленĕ, пионерсем вăхăта хаваслăн ирттереççĕ.

А. Иванов.

Кинопередвижкăсем

Уйăра ĕçсем пынă вăхăтрах автомашинă çине вырнаçтарнă саслă киноустановкăсем 7 пулаççĕ. Вĕсем Куславкка, Шупашкар, Иплей, Куйакина, Тутаркас, Çĕрпӳ тата Йăрмар районĕсенчи колхозсенче саслă кинофильмсем кăтартса çӳреççĕ. Кунсăр пуçне Хĕрлĕ Чутай, Трак, Вăрнар, Тăвай, Иепреç, Йĕлчĕк, Турхан тата Шăмăршă районĕсенче саслă киноустановкăсем ĕçлеççĕ. Вĕсем район центрĕсенче тата колхозсенче кăтартаççĕ. Саслă кинопередвижкăсем тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра колхозсене: „Ленин в Октябре“, „Балтийцы“, „Богатая невеста“, „Мы из Кронштадта“, „Волга, Волга!“, „За Советскую Родину“ тата ытти фильмсене те кăтартаççĕ. Саслă кинопередвижкăсемсĕр пуçне тата ахаль передвижкăсем 67 ĕçлеççĕ.

Республикăлă Испанин 43-мĕш паттăр дивизийĕ.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: 43-мĕш дивизин командирĕ Бельтран бойецсем хушшинче.
(Союзфото).

Н. И. Шелепи

ВЫРМАРА

Ир-ирех тухаç те
Шевле-çиçемле,
Машинсем выльаççĕ
Уй çуттипеле.
Çунатлă çурлисем
Кăчăртаттарса,
Аэроплан пек,
Вĕçсе кайас пек
Чупаççĕ çавранса—
Тыррине вырса:
Сĕллине, тулллине
Тĕпĕнчен хырса.
Çăлтăр пек саланнă
Анисем çине
Тĕмсемпе кĕлтесем,
Суратпа çĕмел.
Хурçăланнă уй-хир
Хапрăк пек кĕрлет,
Колхоз ывăл-хĕрĕ
Амăртса ĕçлет.
Унта бригадирсем,
Унтах ударник:
Атăр-атăр-атăр!
Çантаăк уйар чух
Часрах пĕтерер,
Хĕрӳрех, паттăрсем—
Хурçа чĕресем!
Тӳперен хĕвел те
Хĕрулĕ хĕрет.
Çантаăк выльăса
Хĕр пек хĕп-ртет.
Сарă тулли те,
Урпи те, сĕлли те,—
Пулчĕç хĕвĕнсе.
Тырă-пулă тутă,
Пулмесен пуйан,
Задани тултăр та—
Кирек мĕн туйан.
Ей, бригадир ем,
Ей, ударниксем—
Çентерӳ самани
Ывăл-хĕрĕсем!
Кăмăлăрсем уçă,
Аллăрсем хурçă—
Йара парăр çапла,—
Стахановецла!
Епĕр ĕçре писнĕ,
Пирĕн ĕç чаплă.
Сталинла колхозсен
Ĕçĕ хăватлă.
Хурçă айăр çинче
Чупса çӳретпĕр.
Хаклă премине
Епĕр илетпĕр.
Пĕрлешӳлĕ вăйпа
Паттăр ĕçлетпĕр.
Коммунисăм патне
Çапла çитетпĕр.
Пăхсан куç хăрачĕ,
Алă хăрамаст.
Вăхăтла пухатпăр,
Харама каймаст.
Хĕрӳлĕ те вирлĕ
Ĕçсем колхозра,—
Ну çийетпĕр ĕнтĕ
Чаплă шурă тулла.
Совета пама та,
Хамăра та пур,
Чул çуртсем тума та
Вăхăт çитнĕ пуль,
Машинна ĕçлесен
Тырри те хунат,
Ĕç çинчи хĕрӳлĕх
Çулăмпах çунат.
Анапуç анатра
Ташлат тракторь,
Хурçăлă авангард
Çапла ăмăртат.
Колхозлă хуçалăх,
Орденлĕ халăх—
Çапла епĕр паттăр
Тырă выратпăр.

Çуллахи вăхăтра кирлĕ таварсемпе сутă тумаççĕ

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Суту-илӳ организацисем II-мĕш кварталăн тавар çаврăнăш планне 94 процент тултарнă. Уйкас Кипекйалпоне—73,2 процент, Йамаш йалпоне—85 процент тата Шăхасанти йалмаг—76 процент çеç пурнăçланă.

Суту-илӳ ĕçĕнче çитменлĕхсем нумай. Лавкасенче куллен кирлĕ таварсем сителлексĕр, культуралăх çук. Сутакан-йĕркелĕ суту ту вĕренсе çитмен. Кошкаруй лавкине йалан тусан вĕçсе тăрат. Йĕшкилтре, Шуркассинче, Чулкăмакара, Стелте т. ыт. йалсенче те час-часах лавкасене кунĕ-кунĕпе уçмасăр тăратаççĕ.

Суту-илӳ ĕçĕнчи çитменлĕхсем, тавар çаврăнăш планне ăнăçлăн тултарса пыманни—пĕтĕмпех суту-илӳ ĕçĕнчи руководительсене унта ĕçлекенсенчен килет. Райсойуз председателĕ Леонтйев суту-илӳ организацисене *оперативнă йертсе пырас вырăнне: „Чăвашсойуз пани план тĕрĕс мар, ăна тултарма хыпаланмалийех çук“,*—тесе йалпо правленисене, сутăçсене ĕçре лăпланса ларма пулăшнă.

Суту-илӳ ĕçĕнче тăшманла ĕçсен йулашкисем çаплах пĕтмеççĕ-ха. Йалсене лавкасен шучĕ нумайланса пырас вырăнне, чакаççĕ. II мĕш кварталта вĕçĕнче Шăхальпе Çĕн Чалкассинчи лавкасене ним сăлтавсăрах хупнă. Çак лавкасене хупнине райсойуз „пĕлмесĕр йулна“. „Лавкасене хупнишĕн епĕр ответлă мар“,—теççĕ райсойузра ĕçлекенсем.

Халăх вăхăтра ĕççыннисем суту-илӳ организацисене çуллахи таварсем кӳрсе килме заказсем параççĕ. Анчах вĕсем ĕççыннисен ыйтнисене пурнăçласа пымаççĕ.

Çуллахи вăхăтра морс, ситро, сăра-квас таврашĕ ĕçес килет. Вĕсене Шăхасанта тупса ĕçме çук. Квас, сăра сутакан уйрăм ларăксем çук. Çак çуллахи май уйăхенче райĕçтăвком президиумĕ Шăхасанта квас, сăра сутмалли ларăксем уçассси çинчен уйрăм постановлени йышăннăчĕ, анчах райсойузра *ăна по вăл постановлениене пурнăçа кĕртмеççĕ.*

Тавар çаврăнăшĕ уйăхран уйăхах тулса пыманни çак çитменлĕхсенчен килет те ĕнтĕ.

Ал. Соловйов.

„Иллюстрированная газета“ иккĕмĕш номĕрĕ

Кăçал июнь уйăхĕнче Мускавра „Правда“ хаçат çумĕнче „Иллюстрированная газета“ йатлă илемлĕ хаçат тухса тăма пуçларĕ. 1-мĕш номĕр июнь уйăхĕнче тухрĕ. Хаь, июлĕн 15-мĕшĕнче, çав хаçатăн 2-мĕш номĕрĕ тухнă. „Иллюстрированная газета“ уйăхра икĕ хут тухса тăрат. Хаçат 12 страницăлă, лайăх хут çине пичетленет.

„Иллюстрированная газета“ хаçатăн 2-мĕш номĕрĕнче Совет Сойузĕн Геройĕсем Коккинакипе Брйандинский Мускав—Владивосток маршрутпа туса иртернĕ чаплă вĕçев çинчен, РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем çинчен, Мускав—Атăл канал, Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займĕ т. ыт. çинчен фотоӳкерчĕксемпе статйасем пур. Унтах Д Заславскин „РСФСР Верховнăй Совечĕ“ йатлă статйине, Б. Галинан „Красная звезда колхоз“ йатлă фото-очеркне, И. Еренбургăн „Геройла Испани“ йатлă фото-очеркне пичетленĕ. Кусемсĕр пуçне „Тетушка Аксинья семерых родила...“ йатлă çĕнĕ йурăна нотăсемпе пичетленĕ, литература календарĕнче Н Г. Чернышевский çинчен сырнă. Хаçатра печĕк фельетон тата ытти информацисем те нумай.

„Иллюстрированная газета“ пĕр номĕрĕ 75 пус тăрат.

Драмкружокăн хăйулă утăмĕсем

Пушнар йалĕнчи (Йĕтĕрне р.) Мичурин йачĕпе хисепленсе тăракан колхозри драмкружок иртнĕ çулта организациленнĕ. Вăл хăйен ĕçĕнче çак кĕске вăхăтрах пысăк çитĕнӳсем турĕ. Ку драмкружокпа районта малта пыракан драмкружоксенчен пĕри шутланат.

Пушнар драмкружокĕн членĕсем спектакльсене хăйсен ролĕсене чăн-чăн пурнăçри пек выльăса кăтартма тăрăшаççĕ. Вĕсем куншăн вăйа хурса ĕçлеççĕ.

Драмкружокра пурĕ 35 çын. Вĕсенчен çурри ытла комсомолецсем. Комсомолецсемпе пĕрлех драмкружокра çамрăк ачасемпе ватă çынсем те пур.

Драмкружокăн малтанхи репертуарĕнче Калканăн „Аниса“ пйесси пулнă. Ку пйессăна пĕтĕмпе 18 йалта лартса панă. Пйессăпа 10—12 километр таранччен кайса Тутаркас районĕнчи Урпаш, Пушкăрт тата ытти йалсене те выльаса панă. Куракансем пйессăра выльăкансенчен уйрăмах Аниса ролне выльакан Григорйевăна тата Д. Шувер, Е. Фомичов, З. Мокейева йачĕсене асăнаççĕ.

„Аниса“ хыççăн драмкружок П. Н. Осипăв çырнă „Кушар“ пйессăпа ĕçлеме тытăнчĕ. Ку пйессăна пурĕ 14 сцена çинче лартнă. „Кушара“ Турй-Ачак, Мăн-Чураш, Йаламăн, Ирçе-тата ытти йалсенче те лартса панă. Ку пйессăра Мурза ролне выльакан П. Мокейĕв, Лисук ролне выльакан Е. Смирнова, Лисукăн ашшĕ ролне выльакан И. Башмаков, Артемий ролне выльакан Н. Волков, Ерхип ролне выльакан С. Токарев артиссем хăйсен пултарулăхĕсене чăннипех кăтартса пачĕç.

Çитĕнӳсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те чылай. Акă, тĕслĕхрен, декораци пирки ĕç начар тăрат. 3-мĕш уйăхра кăтартмалли вăрмана кашни спектакльтех урăхласа кăтартаççĕ. Кунсăр пуçне тата тумтир йенчен пысăк çитменлĕх пур. Ку йенпе драмкружока колхоз правленни пулăшмала.

С. Филиппăв.

ÇĔНЕЛЕКЕН ЙАЛ

СĔНТĔРВĂРРИ. Кивĕ Тутайкасси йалĕ ĕлĕк чухăн, тĕттĕм йал пулнă. Совет влаçĕ пулнăранпа, колхоз организациленĕ хыççăн йал сăн-сăпачĕ тĕпренех улшăнчĕ. Халĕ „Кунер“ колхоз кунран кун вăйланса, çирĕпленсе пырат. Колхозăн сысна ферми, çил вăйĕпе ĕçлекен двигатель, 8000 тенкĕ парса илнĕ йăратлă айăр, 250 çын вырнаçмалăх клуб, автомашинă т. ыт. те пур. Колхоз ӳсĕнĕ майĕпе колхозниксем те пуйан та культурăллă пурăнма пуçлареç. Иртнĕ çул 8 колхозник çĕнĕ пӳрт лартрĕç. Кăçал тата 6 колхозник çĕнĕ пӳрт лартма тытăннă.

Г. Çмирнов.

Хроника

— Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ В. Т. Срибный йулташа Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн замеçтителĕнчен хăтарнă.

— Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ И. И. Золотников йулташа Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн замеçтителне лартнă.

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн июлĕн 21-мĕшĕнче тухнă 166-мĕш номерĕнче (тиражăн пĕр пайĕнче) РСФС Республикин „1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Сессийĕ 1938 çулти июлĕн 19-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен информацийĕ пĕтĕрĕре РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиум Председателĕн Замеçтителĕсен хушамачĕсенчĕ йанăш кайнă. 5-мĕшпе 6-мĕш пунктсене çакăн пек тӳрлетсе вуламала:

5. Магомедов Джамалутдин Махмудавич, Левашинск округĕнчен суйланă депутат, Дагестан АССР.

6. Канкулăв Маша Герандукăвич, Октяберски округĕнчен суйланă депутат, Кабардино-Балкар АССР.

Пĕлтерни

Июлĕн 26-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре Шупашкарти партийĕ вĕрентӳн тĕп çуртĕнче ПАРТИН II-мĕш СПЕСЕН ИСТОРИЛĔ ĔÇСЕМ ÇИНЧЕН доклад пулат.

Доклад итлеме республикăри тата хуларти парти активăн пымала.

ПСК(б)П Обкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕ.

ПСК(б)П ХУЛА КОМИТЕЧĔ

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Шупашкарти тĕрĕ тĕрлекен „Вышивка“ ертелне

çак специальнăçсемпе

хĕрарăм работницăсем кирлĕ:

Пир çине тĕслĕрен татăксемпе çĕлесе илемлĕ тĕрĕсем тăвакансем,

Çипрен тĕрлĕрен чĕнтĕр çыхакансем,

Машинăпа тата алăпа тĕрĕ тĕрлекенсем,

Чăлха, носки тата ытти кĕпе тумтирсене çыхакансем (трикотаж ĕçĕ).

Ĕçлеме килĕшекенсен çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле: г. Чебоксары, ул Калинина д. № 49. Телефон № 1—45.

ЕРТЕЛ ПРАВЛЕНИЙĔ.

2—1

Учителсен Шупашкарти канмали çуртне

Кухньă работницисем, Официанткăсем тата коньух

КИРЛĔ

Адрĕс: Чебоксары, Левый берег Волги, Дом отдыха учителей.

Автохуçалăхсене пĕлсе тăма

Автомобилсен „Чувашия“ тесе çырнă кивĕ номĕр паллисем 1938 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен пăрахăçа тухаççĕ.

Автохуçалăхсен кивĕ номĕрĕсене çĕннисемпе улăштармала. Улăштарма машинăсен паспăрчĕсене тата кивĕ номĕр паллисене Госавтоинспекцине тăратмала.

Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Рабочисемпе Хресченсен Милици Управлени Глававтоинспекцийĕ.

2—1

Лашă çухалнă

Хура, кĕсре, тăватă çулта кайнă, енерчĕк вырăнче тӳме пек шурă пур. Çак адрĕспе пĕлтерме ыйтатпăр: колхоз „КИМ“ Вурмерский с.с. Цивильский район. ПЛОТНИКОВУ.

„Чăвашкинотрестăн“ Шупашкарти фотографине йалан ĕçлеме-квалификацилĕ

ФОТОГРАФ

кирлĕ

Адрĕс: г. Чебоксары, ул. Розы Люксембург, 10. Фотография „Чувашкино“.

Чăвашкинотрестне

йалан ĕçлеме

аслă бухгалтĕр замеçтителĕ
бухгалтĕр-ревизор тата
счетовод-кассир

кирлĕ

Адрĕс: Чебоксары, здание Кинотеатра, Чувашкинотрест.

3—1

Кĕрĕк арки йăвалакансем

Халăх йурринче „Шăппăн-шăппăн лармашкăн, шăпчăк чĕппи мар епĕр“, тенĕ. Анчах нимĕскер çинчен те хыпса çунма пĕлмесĕр шăпчăк чĕпписем пек шăппăн ларакансем, ĕç тумасăр, кĕрĕк арки йăвалакан çынсем пурах. Çавăн пек вырăн—ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусствă ĕçĕсен Управленийĕ Унăн пуçлăхĕсем В. Иванова Г. Иванов чăн-чăн ĕç тăвас вырăнне, хутсем ală пусса ларнă.

Драматургсемпе художниксен тата композиторсен июлĕн 20 мĕшĕнче пулса иртнĕ пухăвĕ Искусствă ĕçĕсен Управленийĕ хăйĕн ĕçне бюрократла туса пынипе искусствă фронтне ӳсме чăрмантарнине кăтартрĕ.

Управлени музыкă ĕçне сарса йарас пирки нимĕскер те туман. Музыкă кĕнекисем халĕ йалсенче çук, анчах вĕсене кăларас пирки Чăваш/из тĕлленмен те. Управленин бюрократсем „пирĕн ĕç мар“ тесе ала сулаççĕ. Çĕнĕ талантлă кадрсем хатĕрлес пирки те ĕç питĕ йухăнса кайнă. Мускавпа Ленинградри государствă консерваторийĕсенче пултарулă йулташсем вĕренеççĕ. Г. Воробйов чăваш халăх йуррисем тăрăх лирикăлла çĕнĕ йурăсем çырнă, вĕсенчен питĕ илемлисем пур. Анчикăв чăваш поечĕсен сăввисене музыкă çине хунă. Хирбикăв „Нарспи“ поемă тăрăх оперă çырат, малтанхи актне хатĕрлесе çитерет. Çак йулташсем чăваш музыкĕнче хăйулă утăмсемпе ӳсе пыраççĕ, музыкă ăсталăхне алла çавăрса илесшĕн.

Анчах Управлени вĕсене чăннипех большевикла пăхса ӳстерессин çинчен аса илме мар, вĕсене хăйсен куçĕнчен вĕçертсе йанă.

Темиçе çул хушши искусствă, музыкă тата литературă руководствинче буржуалă националиссем сăтăр тусă пынă, çамрăк талантлă çынсене хĕстерсе пырса, вĕсене искусствă фронтĕнчен хăваласа кăларас шутпа пĕтĕм ирсĕр те хура вăйĕсене хунă. Вĕсенчен йулнă сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе Искусствă ĕçĕсен Управленийĕ те, чăваш писателĕсен сойузĕ те ку таранччен ăнăçлă ĕçсем туман.

Чăваш Академи театрĕ хăйĕн тивĕçлĕхне те, йатне те йанă. Артиссен труппи ытларах ăнсăртран килсе кĕнĕ çынсенчен тăрат, театр ăсталăхне хăпартас пирки нимĕнле ĕç те çук. Йаланах пĕр кăмăллă ĕçлесе пыракан пултарулă коллектив тăвасси çинчен Искусствă ĕçĕсен Управленийĕ шухăша кайман-ха. Театр çезонĕ пуçланасси инçех мар, анчах халиччен пйессăсен репертуарĕ çук. Театр темиçе çул хушши хăйсен хаклăхне çухатнă пйессăсем çинче ларат пулсан та чăваш драматургĕсемпе ĕçлемест, вĕсене театрпа пĕрле ӳстерес ĕçе тытăнма та палăртман.

Кăçал чăваш художникĕсен сойузĕ государствă бюджетне кĕмесĕр пĕр пус укçасăр тăрса йулнă, сойуз халĕ пĕтĕмпех саланса кайас патне çитнĕ. Искусствă ĕçсен Управленийĕ кун çинчен маннă.

Чăваш литературипе искусстви чылайах пысăк ӳсемсем тунă. Литературăра та, искусствăра та хаклă произведенисем пур. Пирĕн халăх талантлă. Халăх тăшманĕсем сăтăр туни литературăпа искусствă фронтĕнче сисĕнмелех пулнă, ăна хăвăрттăн пĕтерсе тимлĕн ĕçлени кирлĕ. Парти Чăваш Обкомĕ литературăпа искусствă работникĕсене чăн-чăнах аслă пултарулăх çулĕ çине кăларас пирки чылайах ĕçсем тунă. Анчах Искусствă ĕçĕсен Управленийĕ çак кăтартусене пурнăçа кĕртмен, хăйĕн тимсĕрлĕхĕпе, ĕçе йĕркелеме тăрăшман пирки литературăпа искусствă фронтĕнчен уйăрăлса кайнă.

А. С.

Уполномоченный Чувашглавлита № 380
13
Гор. Чебоксары. Типография № 1 Чув полиграфтреста, заказ № 581.